ХЫПАР

1925 çулхи раштавăн 12-мĕшĕнчен пуçласа 1966 çулхи çу уйăхĕччен тĕрлĕ ятпа тухнă, «Хыпар» хаçат пуçарăвĕпе 1996 çулхи кăрлачăн 20-мĕшĕнчен тепĕр хут тухма пуçланă

# Çамрăксен хаçачĕ

Чăваш Республикин Çамрăксен патшалăх премийĕн лауреачĕ

2014, кăрлач, 17, эрне кун, 2 /5991/ №

Хакĕ ирĕклĕ

WWW.hypar.ru
molgazeta@rambler.ru

эрнелĕх телепрограмма

16+

# "Математика олимпиадинче каччă сахал"



Любовь ПЕТРОВА сăн ÿкерчĕкĕ.

**«Вĕренÿ» наци проекчĕпе килĕшÿллĕн çитĕнÿ тунă çамрăксене çуллен 60 е 30 пин тенкĕпе танлашакан премипе хавхалантараççĕ. Çак йышра Чăваш Ен çамрăкĕсем те пур. Пĕлтĕр кунашкал чыса 44-ăн тивĕçнĕ, кăçал 46-ăн. Лауреатсен йышне пĕлтĕр кĕнисенчен чылайăшĕ Шупашкарта пурăнать, 8-шĕ çĕр-шывăн тĕрлĕ регионĕнче аслă пĕлÿ илет.**

**Элĕк районĕнчи Кĕçĕн Тăван ялĕнче çуралса ÿснĕ Марта Вавилова преми илесси пирки пачах шухăшламан. Раççей шайĕнчи олимпиадăра мала тухнăшăн 30 пин тенке тивĕçнĕ çамрăкпа кăнтăр апачĕ вăхăтĕнче тĕл пултăмăр.**

**Марта 7-мĕш класчен ялти шкулта вĕреннĕ. Унтан тĕп хулари Г.С.Лебедев ячĕллĕ наци интернат лицейĕн физикăпа математика класĕнче ăс пухнă. 9-мĕш класс пĕтерсен Шупашкарти экономика-технологи колледжне вĕренме кĕнĕ. Бухгалтер экономист специальноçне алла илнĕскер халĕ И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУра куçăн мар майпа вĕренет. Çав вăхăтрах коммерци фирминче ĕçлет.**

Марта темиçе шкулта вĕренме тивнĕшĕн ÿкĕнмест, савăнать çеç. Г.С.Лебедев ячĕллĕ наци интернат лицей вĕрентекенĕсене те ырăпа çеç аса илет. Хальхи вăхăтра çак шкулăн алăкĕ хупăннăшăн та чунран кулянать. Унăн тантăшĕсем тепĕр виçĕ çултан пĕр диплом илеççĕ пулсан вăл вара вĕсемпе пĕрлех иккĕмĕшне алла илĕ. Пике колледж хыççăн аслă шкулта вĕренме чылай çăмăлраххине палăртрĕ.

Математика предметне Марта ачаранах юратнă. Урокра вăл учитель хушнă задачăна чи малтан шутланă, тĕрĕслев ĕçĕсене те кĕске вăхăтрах пурнăçланă, çавăнпах пике пулас профессине те çак енĕпех çыхăнтарнă. Колледжра вĕреннĕ чухне вăл хăйĕн тарăн пĕлĕвĕпе палăрнă. Пĕлтĕр Марта професси пĕлĕвĕ паракан вĕренÿ учрежденийĕсенче ăс пухакансен хушшинче республика шайĕнчи «Экономика тата бухгалтер учечĕ» олимпиадăра мала тухнă. Çавна май Чăваш Ен чысне Раççей шайĕнче хÿтĕленĕ. Кун пирки 19 çулти пике каласа пачĕ.

11

*"Канмалли кунсене çу уйăхне куçарсан ял ĕçченĕшĕн лайăхрах пулĕччĕ".*
*2 стр.*

*"Упăшка хăть мĕн пĕçерсе çитерсен те тиркет. Мĕн тумалла-ши?"*
*12 стр.*

*Анатолий Миронов телефон валли чăвашла раскладка шухăшласа кăларнă.*
*3 стр.*

*Халĕ арăмĕ мăшăрне юлташĕсемпе сăра ĕçме чарнăшăн та уйрăлаççĕ.*
*13 стр.*

*ЧР Пуçлăхĕн кăçалхи стипендиачĕсен йышĕ паллă.*
*4-6, 8-9, 11 стр.*

*Иммун тытăмне çирĕплетмешкĕн мĕн çимелле?*
*15 стр.*

МĔН КАЛАÇÇĔ ЦИФРĂСЕМ?

# Шупашкаршăн – 167 пин те 295 сасă



Çапла! "Раççейри хула. Наци суйлавĕ – 2013" веб-проект пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх, Шупашкар – чи илĕртӳллĕ, пурте пĕлекен, паллă хула. Интернет-конкурсра Чăваш Ен тĕп хули 176 пин те 295 сасă пухнă. Ку иккĕмĕш вырăна тухнă Краснодартан 35 пин сасă ытларах. Виççĕмĕш вырăнта – Хабаровск.

Сăмах май, рейтингра Питĕр – 19-мĕш, çĕршывăн тĕп хули вара 50-мĕш вырăнта çеç.



# Телекурав – малта

Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ йĕркеленĕ тĕпчев пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх – республикăра пурăнакан 18 çултан аслăрах çынсен 89,9 проценчĕ çĕнĕ хыпарсемпе телевизор пăхса паллашать. Иккĕмĕш вырăнта – Интернет.

Çав вăхăтрах Чăваш Енри 18-24 çулсенчи çамрăксен 75 проценчĕ Интернета куллен кĕрет. 55 çултан аслăраххисен 85 проценчĕ вара кашни кунах телевизор пăхать.

# Çĕнĕ çулăн пĕрремĕш кунĕнчех – 49 ача



Чăнах! Кăçалхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнче республикăра 49 пепке çут тĕнчене килнĕ. Хĕллехи каникул вăхăтĕнче, кăрлачăн 1-8-мĕшĕсенче, Чăваш Енре пурĕ 360 ача çуралнă. Вĕсенчен 176-шĕ – арçын ача, 184-шĕ – хĕр ача.

Сăмах май, çав кунсенче 69 çемьере виççĕмĕше ун хыççăнхи пепке çутă кун курнă.

**Никита АНДРЕЕВ.**

ЭПĔ ТЕ КАЛАМ-ХА

# Канма пĕлместпĕр

**2005 çулччен Раççейре кăрлачăн 1-мĕшпе 2-мĕшĕ кăна канмалли кунсемччĕ, çавăнтанпа ĕçлекенсем те, шкул ачисем пекех, вăраха тăсăлакан каникула кайма тытăнчĕç. Юрать, пĕлтĕрпе кăçал килте "лармалли" кунсене кăшт чакарчĕç, урăх тапхăра куçарчĕç. Тем тесен те, çак кунсенчен тепĕр пайне те çу уйăхне катертмелле пек туйăнать. Мĕншĕн иккенне татăклă сăлтавсемпе çирĕплетем.**

**Пĕрремĕшĕнчен – тӳпере хĕвел хĕртнĕ, тавралăх ешернĕ вăхăтра канма чылай лайăхрах. Аслăраххисем вăхăта пахчана тухса, хуларисем дачăна кайса, çамрăксем вăрман уçланкине çитсе ирттерме пултараççĕ. "Хĕлле йĕлтĕрпе чупма, конькипе ярăнма кам чăрмантарать?" – тейĕ хăшĕ-пĕри. Ку çапла-ха та, анчах спортпа туслисен йышĕ вырăнти тӳре-шара хут çине çырнине ĕненес тĕк кăна пысăк. Тĕрĕссипе, вăл е ку ял-салара куллен йĕлтĕр сыракансене шутлама алăри пӳрнесем те çитеççĕ.**

**Иккĕмĕшĕнчен – çу уйăхĕнче кану кунĕ ытларах уйăрса пани ял çыннишĕн меллĕрех. Ку тапхăрта çулленех пахча çимĕç акатпăр, лартатпăр. Ĕç, паллах, нумай. "Хĕлле ĕç çук-им?" – килĕшмĕ хăшĕ-пĕри. Çукрах çав. Халĕ ав юр та 15-20 çул каяллахи чухлĕ çумасть, хапха таран кĕрт хӳмест. Юра урама-çырмана çунашкапа туртас-сĕтĕрес хуйхă çук. Вăхăта çветке чупса, лармана тухса, юмăç ярса ирттерекен халĕ питĕ-питĕ сахал. Кун каçипе тенĕ пекех телевизор умĕнче саркаланса выртатпăр. Ку вара сывлăха çирĕплетмест, хавшатать кăна.**

**Виççĕмĕшĕнчен – преступлени нумайланать, çемьесенче харкашу-хирĕçӳ тăтăшланать... Кăна эпĕ каламастăп, статистика çирĕплетет. Раççей следстви комитечĕн Чăваш Енри управленийĕ пĕлтернĕ тăрăх – кăçалхи каникул вăхăтĕнче çынна вĕлернĕшĕн – уголовлă 4 ĕç, этеме çут тĕнчерен уйăрăлмаллах хĕненĕшĕн – 2 ĕç, хĕре ушкăнпа мăшкăлланăшăн 1 ĕç пуçарнă. Вĕсем пирки иртнĕ номерте çырнăччĕ. Çав кунсенче пулнă вак преступленисене вара асăнса та пĕтерес çук. Вăрăхурах та канмалли кунсенче çывăрмасть. Ав Сурхурире Сĕнтĕрвăрри районĕнче пурăнакан 24 çулти каччă ÇÇХПИн ĕç машинине вăрласа Раççее тĕлĕнтерчĕ. Улталанă, çаратнă... тĕслĕх те темĕн чуль.**

**Тăваттăмĕшĕнчен – васкавлă медицина пулăшăвĕ паракансен ĕçĕ нумайланать. Кăçал та кăрлачăн малтанхи кунĕсенче шурă халатлисен 100 ушкăнĕ ĕçленĕ. Çĕнĕ çулăн пирвайхи 8 кунĕнче 8 пин те 573 çын медицина пулăшăвĕ ыйтса шăнкăравланă, 3691 пациента больница койки çинех вырттарма тивнĕ. Васкавлă медпулăшу машинине мĕн сăлтавпа чĕннĕ-ха? 1000 çынран ытларахăшĕ суранланнине пула йыхравланă. Чылайăшĕ эрех-сăра сыпнипе шуçса ӳкнĕ, çемьери хирĕç тăрура сусăрланнă. "Çуттине" ĕçсе наркăмăшланнă 35 çынна сыватмăша илсе çитернĕ, тепĕр 213 çынна вара пăсăлнă çимĕçпе апатланнăшăн сиплеме тивнĕ. Сăмах май, апат-çимĕçе çисе ярас çуккине пĕле тăркачах ăна юрăхсăра тухмалăхах мĕншĕн хатĕрлетпĕр-ха? Кăçалхи канмалли кунсенче республикăра пушар та сахал мар алхаснă – 32 тĕслĕх. Вĕсенчен 6 çыннăн пурнăçĕ татăлнă. Палăртса хăвармалла: çак йышран тăваттăшĕ ӳсĕр пулнă. Медицина ĕçченĕсем "хĕрлĕ автан" ташланă 27 вырăна çитнĕ, сĕрĕм тивнĕ 11 çынна пулăшу панă.**

**"Канмалли кунсене çу уйăхне куçарсан преступлени пулмĕ-и? Пушар алхасмĕ-и? Арăмĕпе упăшки харкашмĕ-и?" – хирĕçлĕ хăшĕ-пĕри. Тем тесен те, чуна çӳçентерекен тĕслĕх ун чухлех пулмĕ. Ара, ака-суха вăхăтĕнче кахалли те ĕç патне туртăнать-çке. Ял тăрăх ĕçсе çапкаланса çӳрекен валли те кӳршĕ-аршă патĕнче ĕç тупăнатех. Паллах, пурнăçăн кашни самантне хаклакан çын хĕл кунĕсенче те чунне пуянлатмалли, сывлăхне çирĕплетмелли, тавра курăмне анлăлатмалли майсем шырĕ. Анчах пурте ун пек мар-çке. Канма пĕлмесен пире хĕл кунĕсенче кантармаллахши? Тен, Мускаври тӳре-шаран çу, çĕртме уйăхĕсенче кану кунĕсем уйăрса парса Раççей гражданĕсене кил-тĕрĕшре тар тăкма май туса памалла? Усси ытларах пулĕ.**

**Дмитрий МОИСЕЕВ.**




ОЛИМПИАДА ХЫПАРĔСЕМ

# Пуçланиччен – 3 эрне

Олимпиада уçăлнипе çыхăннă мероприятисем виçĕ лапамра иртĕç. Çакна «Сочи – 2014» йĕркелӳ комитечĕ пĕлтернĕ. Сценари 9 тапхăртан тăрать. Концерт програми нарăсăн 7-мĕшĕнче каçхи 8 сехет те 14 минутра пуçланĕ. Унта паллă çынсем, сумлă хăнасем килсе çитĕç. Йĕркелӳçĕсем ыттине хальлĕхе вăрттăнлăхра тытаççĕ.

* * *

Медиацентрсенче Кубань апатланăвĕсем уçăлĕç. Унта журналистсене чейпе, кĕлентĕрпе сăйлĕç. Çак шухăша Краснодар крайĕн вице-кĕпĕрнаттăрĕ Галина Золина сĕннĕ. Ăна пурнăçа кĕртес тĕллевпе 12 тонна кĕлентĕр туяннă.

* * *

«Сочири Олимп эткерĕ» – пулас ăмăрту çинчен тухнă пĕрремĕш пысăк кĕнеке. Унта Олимп проекчĕ мĕнлерех пурнăçланни çинчен вуласа пĕлме пулать. Çавăн пекех тунă ĕçсен кăтартăвĕсемпе паллашаятăн: пăр керменсем, йĕлтĕр йĕрĕ, çĕнĕ çулсемпе кĕперсем, вокзалсемпе портсем, кану çурчĕсем тата ытти объект. Пĕтĕмпе кĕнекере 400 яхăн сăн ӳкерчĕк. Унăн авторĕсем – «Сочи – 2014» йĕркелӳ комитечĕн президенчĕ Д.Чернышенко, Раççейри Олимп комитечĕн президенчĕ А.Жуков, Раççейри Паралимп вăййисен комитечĕн генеральнăй секретарĕ М.Терентьев, «Олимпстрой» тĕп архитекторĕ О.Харченко...

* * *

Чăваш Ен пики Елена Муратова Çĕнĕ çула Ванкуверта кĕтсе илнĕ. Тăватă çул каялла унта Олимп вăййисем иртнĕ. Елена çав хулара Тĕнче кубокне хатĕрленнĕ. Шăпах унăн кăтартăвĕсем тăрăх Сочие каякансене палăртĕç. Сăмах май, Елена Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен 2-мĕш спорт шкулĕнче вĕренет.

* * *

Кăрлач уйăхĕн 15-мĕшĕнче Олимп çулăмĕ Брянска çитнĕ. Вăл çул çӳреве тухнăранпа 100 кун ытла иртнĕ. Çулăма хула урамĕсемпе 210 çын йăтса чупнă. Маршрут 39 çухрăмпа танлашнă. Факел вырăнти лаша завочĕн виçĕ урхамахĕпе те «ярăнса курнă». Брянскра пурăнакансем хăнасене каллех çĕнĕлĕхпе тĕлĕнтернĕ. Олимп çулăмне чи юлашки йăтса чупакан умне килте тĕртнĕ 156 метрлă пир ал шăлли сарнă.

* * *

Ют çĕр-шывсенчи массăллă информаци хатĕрĕсем пĕлтернĕ тăрăх – тĕнчипе паллă сĕрме купăсçă Ванесса Мэй Сочири Олимп вăййисене хутшăнасшăн. Юлашки çулсенче вăл хăйне йĕлтĕр спортĕнче тĕрĕслет. Ванесса Мэй Аслă Британире пурăнать, анчах Олимпиадăра вăл Таиландăн пĕрлештернĕ команди йышĕнче ăмăртасса пĕлтернĕ.

**Любовь ПЕТРОВА хатĕрленĕ.**


**• УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ**
**Чăваш Республикин Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерстви**

**"Хыпар" Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ**

**Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ**

**• Редакци канашĕ:**
**М.М.АРЛАНОВ – «Хыпар» Издательство çурчĕн тĕп редакторĕн çумĕ**
**Н.Н.КАЗАКОВ – ЧР Композиторсен союзĕн ертӳçи**
**А.П.ЛЕОНТЬЕВ – «Хыпар» Издательство çурчĕн директорĕ-тĕп редакторĕ**

**• Пирĕн адрес: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, "Çамрăксен хаçачĕ"**
**Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.**

**Факс:** /8352/ 28-83-70, 56-20-07.
**Электрон почти:**
**molgazeta@rambler.ru**
hypar@chtts.ru
pop408@rambler.ru
**Сайт:**
WWW.hypar.ru

**• Телефонсем:**
**Редактор 28-83-61**
**Политика, право, информаци пайĕ 28-84-05**
**Экономика, социаллă ыйтусен, ял пурнăçĕн пайĕ 62-30-07**
**Çамрăксен организацийĕсен, çарпа патриотизм, спорт пайĕ 28-83-61**
**Культура, кăмăл-сипет, çырусемпе массăллă ĕçсен пайĕ 62-30-07**

**Редактор Д.А.МОИСЕЕВ**

**• Издательство директорĕ В.А.ЧЕМЕРЕВ Тел. 56-00-23**

**• Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службин 2013 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ ФС77-54015 номерпе регистрациленĕ.**
**• Хаçат индексĕ - 54804.**

**• Ал çырусене рецензилемеççĕ тата каялла памаççĕ**

**• Дежурнăй редактор И.Е.АЛЕКСЕЕВА**

**• Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ компьютер центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.**

**Тираж 8025.**
**Заказ 123.**

**Пичете графикпа 18 сехет те 30 минутра алă пусмалла.**
**18 сехетре алă пуснă.**

СПОРТ



**Иртнĕ 2013 çул Чăваш Енри спорт аталанăвĕн историне яланлăхах кĕрсе юлчĕ. РФ Физкультурăпа спорт министерстви çĕр-шыври регионсен хушшинче çулсерен ирттерекен конкурсра пирĕн республика пуçласа пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Раштав уйăхĕн варринче РФ спорт министрĕ Виталий Мутко «Раççей регионĕ» ылтăн кубока тата ытти наградăна ЧР Пуçлăхне Михаил Игнатьева савăнăçлă лару-тăрура пачĕ.**

**Пĕр ÿстермесĕр каласан – пĕлтерĕшлĕ çак çитĕнÿре Михаил Васильевичăн тÿпи чăннипех те пысăк. Канмалли кунсенче е каçсерен ĕç хыççăн ăна спорт çурчĕсенче е стадионра, хĕлле вара йĕлтĕр çулĕ çинче курма пулать. Вăл волейболла лайăх вылять, чупу дистанцийĕсенче те маттур. Кăрлач уйăхĕн 5-мĕшĕнче Пĕтĕм Раççейри спортпа сывлăх вунă кунлăхĕ пуçланчĕ. Йĕлтĕрпе чупма юратакан çĕр-çĕр çын Шупашкарти хĕллехи спорт центрĕнчи уява çитрĕ. Михаил Игнатьев, унăн мăшăрĕ Лариса Юрьевна тата ывăлĕ Ваня старта хаваспах тухрĕç.**

# Республика Пуçлăхĕ старт пачĕ

Кăрлачăн 11-мĕшĕнче Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен ятарлă 3-мĕш спорт шкулĕн çĕнетнĕ манежĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕн Михаил Игнатьевăн кубокне çĕнсе илессишĕн çăмăл атлетика енĕпе Пĕтĕм Раççей ăмăртăвĕ пуçланчĕ. Çĕр-шыври 300 ытла спортсменпа пĕрле Беларуç тата Украина чемпионĕсем савăнăçлă парада тухрĕç. Михаил Игнатьев, çăмăл атлетикăн Пĕтĕм Раççейри федерацийĕн президиумĕн членĕ, çĕр-шывăн пĕрлештернĕ командисен тĕп тренерĕн çумĕ Алексей Мельников, тĕнче, XXX Олимп вăййисен чемпионки Анна Чичерова хĕллехи чаплă уявсем тата ЧР Пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илессишĕн иртнĕ ăмăрту ячĕсемпе ăшшăн саламларĕç.

Йăлана кĕнĕ ăмăртусене шанчăк паракан çамрăк спортсменсемпе пĕрле тĕнчипе чапа тухнă атлетсем хутшăнни уйрăмах пĕлтерĕшлĕ. Вĕсенчен пĕри – 2012 çулта иртнĕ Олимпиада чемпионĕ Иван Ухов. Мускавра вĕренекен студент Шупашкарти «Олимпийский» стадионта висĕм çул иртнĕ Раççей чемпионатĕнче те ылтăн медале тивĕçнĕччĕ. Хальхинче Иван Çĕнĕ Шупашкарта тĕлĕнтерчĕ.

– Эпĕ вунă çул каялла 800 метра чупнă чухне çĕр-шыв рекордсменĕпе Валерий Борзаковскипе туслашрăм. Вăл ун чухне Шупашкарта иртнĕ Пĕтĕм Раççей ăмăртăвĕнче çĕнтерчĕ, ун хыççăн Афинăра иртнĕ XXVIII Олимп вăййисенче çав дистанцирех питĕ çивĕч кĕрешÿре пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Борзаковскирен тĕслĕх илсе эпĕ те 2008 çултанпа Атăл хĕрринчи чи илемлĕ хулана килме пуçларăм. Пире кунта питĕ килĕшет. Хальхинче Çĕнĕ Шупашкарта 238 сантиметр çÿллĕшне сикрĕм, – савăнăçне пытармарĕ РФ спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ.

Михаил Игнатьевăн тĕп парнине чи малтан Олимп резервĕсен Çĕнĕ Шупашкарти училищинче вĕренекен ентешĕмĕр Екатерина Блескина çĕнсе илчĕ. 20 çулти спринтер чăрмавлă 60 метра 8,41 çеккунтра парăнтарчĕ, республикăри çамрăксен рекордне çĕнетрĕ, Раççей чемпионатне хутшăнмашкăн путевка çĕнсе илчĕ. Елчĕк районĕнчи Акчел ялĕн пики Ольга Николаева вара юниорсен хушшинче 3000 метра чупса чи лайăх кăтартупа парăрчĕ. 800 метрлă дистанцире малти висĕ вырăна пирĕн ентешсем йышăнчĕç:



Олимп резервĕсен Шупашкарти училищинче вĕренекен Инесса Андреева, Зинаида Антонова тата Алиса Патьянова. Хĕрарăмсен хушшинче Беларуç чемпионки, тĕнче шайĕнче иртнĕ ăмăртусен çĕнтерÿçи Марина Арзамасова парăрчĕ. Унăн кăтартăвĕ – 2 минут та 4,76 çеккунт. Уяв вĕçленес умĕн старта хăвăрт утакансем тухрĕç. Хĕрарăмсен ушкăнĕнче 3000 метрлă дистанцире малти висĕ вырăна чăваш пикисем йышăнчĕç: И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУн журналистика факультетне пĕтернĕ, Пĕтĕм тĕнчери XXVII Универсиадăн иккĕмĕш призерĕ Ирина Юманова, Çĕнĕ Шупашкарти Светлана Васильева тата Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Марина Пандакова. Арçынсен хушшинче вара Мордва Республикин паллă спортсменĕ Андрей Рузавин ылтăн медаль тата ЧР Пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илчĕ. Унăн кăтартăвĕ – 18 минут та 26,51 çеккунт. Финиша ун хыççăн пирĕн ентешсем, тĕнче спорт мастерĕсем Александр Яргунькинпа Петр Трофимов, çитрĕç.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев çĕнĕ çулта старт панă Пĕтĕм Раççей ăмăртăвĕсенчен пĕринче пирĕн ытти ентеш те малти вырăнсене йышăнчĕç: Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн агрономи факультечĕн студентки Елена Горшкова, Елчĕк районĕнчи Зинаида Антоновăпа Ольга Николаева, Çĕнĕ Шупашкарти Сергей Антонов, Евгения Смирнова, Марина Сизова, Анастасия Прокопьева, Патăрьел районĕнчи Кирилл Фролов, Шупашкар районĕнчи Александр Новиков, Муркаш тăрăхĕнчи Вера Васильева, Тăвай районĕнчи Надежда Мокеева тата Олимп резервĕсен Шупашкарти училищинче вĕренекенсем.

**Петр СИДОРОВ.**



РЕСПУБЛИКĂРА, ÇĔР-ШЫВРА, ЧИКĔ ЛЕШ ЕНЧЕ

## Лауреатсене палăртнă

Кăçал журналистсен Çемен Элкер, Николай Никольский, Леонид Ильин премийĕсене камсем илĕç-ха? Кăрлачăн 14-мĕшĕнче комисси ларăвĕ иртнĕ. Чăваш Енри, ытти регионти тĕрлĕ организацире, массăллă информаци хатĕрĕсенче вăй хуракан 21 журналистăн ĕçĕсене пăхса тăхнă.

ЧР Журналистсен союзĕн Çемен Элкер ячĕллĕ премине Чăвашрадио шеф-редакторĕпе Ольга Туркайпа «Советская Чувашия» хаçат тишкерÿçи Елена Зайцева тивĕçнĕ. Леонид Ильин ячĕллĕ премие «Хыпар» хаçатăн экономика пайĕн тишкерÿçине Юрий Михайлова тата Етĕрне район администрацийĕн тĕп специалистне, РФ Журналистсен союзĕн членне Лилия Петровăна панă. Кăçал Николай Никольский ячĕллĕ премине никама та памалла мар тесе йышăннă.

## Пособи виçи ÿснĕ

Кăçалтан пуçласа ача çуратнăшăн пĕр хут паракан пособи виçи ÿснĕ. Халĕ вăл 13,7 пин тенкĕпе танлашать. Ăна 2014 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕ хыççăн ача çуратнисене параççĕ.

Социаллă страховани фончĕн Чăваш Енри уйрăмĕ пĕлтернĕ тăрăх – кăçал пĕрремĕш ачана пăхакан хĕрарăмсене уйăхсерен 2,6 пин тенкĕ параççĕ. Иккĕмĕш тата хыççăнхи ачасемшĕн уйăхсерен паракан укçа сахалран та 5,2 тенкĕпе танлашать. Медицина учрежденийĕнче шута тăнă çие юлнă хĕрарăмсене /анчах вăхăт нумай иртмен тĕк/ 515 тенкĕ параççĕ.

## Ачасем валли – ырă кăмăллăх акцийĕ

Кăрлачăн 13-31-мĕшĕсенче ЧР патшалăх электрон тата кинодокументаци архивĕнче «Ачасем валли – хĕллехи юмах» ырă кăмăллăх акцийĕ иртет. Çак кунсенче сахал тупăшлă çемьере ÿсекен шăпăрлансем тĕрлĕ фильм пăхма пултараççĕ.

Программăна интереслĕ фильмсене кĕртнĕ. Вĕсен йышĕнче Çĕнĕ çул пирки те пур. Ачасем хăйсен юратнă актерĕсене, режиссерĕсемпе çывăхрах паллашма пултараççĕ. Çĕнĕ çулхи каникул хыççăн фильм кăтартасси йăлана кĕнĕ ĕнтĕ.

## Чăвашла раскладка

Швеци программисчĕ Анатолий Миронов андроидăн операци системи валли чăваш чĕлхиллĕ хушăм /приложени/ шухăшласа кăларнă.

Пĕр сăмахпа – Анатолий чăваш символĕсемлĕ альтернатива клавиатура хатĕрленĕ. Çак хушăм пулăшнипе андроидлă хатĕре чăваш раскладкине словарьпе пĕрле вырнаçтарма май пур. Ăна Google Play-ран тÿлевсĕрех усăлама пулать. Нумаях пулмасть андроид валли ытти хушăм та шухăшласа кăларнă. Вĕсемпе усă курса чăвашла çырма пулать. Шупашкарти пĕр шкулта вĕренекен Владислав Скуратов вара çак система валли чăвашла-вырăсла словарь хатĕрленĕ.

## Çамрăк робототехниксем

Çĕрпÿри 1-мĕш вăтам шкулта ăс пухакан ачасем техникăна кăмăллаççĕ. Çук, вĕсем трактор-машинăпа интересленмеççĕ, маттурскерсем роботсем конструкцилеççĕ тата вĕсене «чĕртме» ятарлă программăсем шухăшласа кăлараççĕ.



Малтан шкула конструкторсем илсе килнĕ. Ачасем вĕсенчен механизмсем пуçтарнă. Темиçе уйăхран вĕренекенсем механизмсем валли программăсем хатĕрленĕ. Шкулта робототехника енĕпе ятарлă кружок ĕçлет. Ачасем хатĕрленĕ ĕçсенчен пĕри – хура йĕрпе çеç куçакан робот. Çĕрпÿри 1-мĕш вăтам шкул республика проектне кĕнĕ. Пĕлтĕрхи кĕркунне вĕсем республика шайĕнче иртнĕ ăслăлăх ăмăртăвĕнче виççĕмĕш вырăна тивĕçнĕ.

**Ирина АЛЕКСЕЕВА хатĕрленĕ.**

# Кăçалхи стипендиатсем

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Михаил Игнатьевăн 2014 çулхи кăрлачăн 13-мĕшĕнче алă пуснă Хушăвĕпе килĕшӳллĕн вĕренӳре, тĕпчев, ăслăлăх, пултарулăх, производство ĕçĕ-хĕлĕнче тата ертсе пырас, бизнес-проектсем хатĕрлес енĕпе пысăк çитĕнӳсем тунă 1000 çамрăк кăçалхи кăрлач-раштав уйăхĕсенче 1830 тенкĕпе танлашакан стипенди илсе тăрĕ:**

1. Дмитрий Абрамов, Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕн артисчĕ
2. Стелла Абрашева, Шупашкарти 59-мĕш вăтам шкул вĕренекенĕ
3. Игорь Авдеев, РФ ШĔМĕн Канаш районĕнчи уйрăмĕн оперуполномоченнăйĕ
4. Яна Аверьянова, Улатăр районĕнчи Алтышево вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
5. Анжелика Авруйская, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ аспирантки
6. Екатерина Автономова, Тăвай районĕнчи Тĕмер вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
7. Татьяна Азоркина, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУн Улатăрти филиалĕн студентки
8. Гелия Айнетдинова, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студентки
9. Вячеслав Акимов, Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен Шупашкарти 2-мĕш спорт шкулĕн вĕренекенĕ
10. Елена Албутова, Шупашкарти политехника институтĕн студентки
11. Алёна Александрова, Шупашкарти экономикăпа технологи колледжĕн студентки
12. Арина Александрова, Етĕрне районĕнчи Тури Ачак вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
13. Ирина Александрова, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студентки
14. Ксения Александрова, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ студентки
15. Ксения Александрова, Шупашкар хулин Çамрăксен правительствин членĕ
16. Марина Александрова, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студентки
17. Наталия Александрова, Чăваш Республикинчи навигаципе информаци центрĕн юрисконсульчĕ
18. Оксана Александрова, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студентки
19. Ольга Александрова, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ доценчĕ
20. Татьяна Александрова, "Коммуналлă технологисем" тулли мар яваплă обществăн ертсе пыракан инженерĕ
21. Александр Александров, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студенчĕ
22. Николай Александров, РФ ШĔМĕн Шупашкарти управленийĕн пай пуçлăхĕ
23. Валентина Алексеева, "Все дома" çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха реформăлас енĕпе ĕçлекен общество организацийĕн Чăваш Енри уйрăмĕн пресс-секретарĕ
24. Елена Алексеева, Çĕрпӳри М.В.Силантьев ячĕллĕ 1-мĕш вăтам шкул вĕренекенĕ
25. Ирина Алексеева, Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен 5-мĕш спорт шкулĕн вĕренекенĕ
26. Марина Алексеева, "Грани" корреспонденчĕ
27. Ольга Алексеева, Шупашкарти 176-мĕш ача сачĕн воспитателĕ
28. Рената Алексеева, РФ ШĔМĕн Шупашкар районĕнчи уйрăмĕн специалисчĕ
29. Владимир Алексеев, Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен самбопа дзюдо спорт шкулĕн вĕренекенĕ
30. Руслан Алексеев, Шăмăршă вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
31. Ирина Алжикова, Республикăри ача-пăча клиника больницин педиатр тухтăрĕ
32. Ирина Аливанова, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студентки
33. Анна Альцева, Шупашкарти 14-мĕш кадет шкулĕн вĕрентекенĕ
34. Марина Алякина, Чăваш Республикинчи физкультурăпа спорта аталанма пулăшакан фонд бухгалтерĕ
35. Екатерина Ананьева, ЧР культура училищин вĕренекенĕ
36. Александра Андреева, Шупашкар районĕнчи Тутаркассинчи ача-пăча искусство шкулĕн преподавателĕ
37. Александра Андреева, Олимп резервĕсен Шупашкарти училищин вĕренекенĕ
38. Алена Андреева, Çĕмĕрле хула администрацийĕн ертсе пыракан эксперт специалисчĕ
39. Анастасия Андреева, Шупашкарти ӳнер училищин вĕренекенĕ
40. Инесса Андреева, Олимп резервĕсен Шупашкарти училищин вĕренекенĕ
41. Ирина Андреева, Шупашкарти çул çитменнисен социаллă реабилитаци центрĕн специалисчĕ
42. Кристина Андреева, Канашри 6-мĕш вăтам шкул вĕренекенĕ
43. Надежда Андреева, Канаш хулин библиотека тытăмĕн библиотекарĕ
44. Наталия Андреева, Тăвайри ача-пăча искусство шкулĕн вĕренекенĕ
45. Ольга Андреева, Елчĕк районĕнчи халăха ĕçпе тивĕçтерекен центрăн ертсе пыракан инспекторĕ
46. Татьяна Андреева, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ доценчĕ
47. Юлия Андреева, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студентки
48. Юлия Андреева, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студентки
49. Андрей Андреев, Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен 1-мĕш спорт шкулĕн вĕренекенĕ
50. Евгений Андреев, Тăвай вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
51. Сергей Андреев, ЧР ШĔМĕн боецĕ
52. Вера Андрианова, РФ ШĔМĕн Шупашкарти управленийĕн аслă дознавателĕ
53. Михаил Андриянов, Канаш районĕнчи ачасемпе çамрăксен Г.Н.Смирнов ячĕллĕ спорт шкулĕн тренерĕ
54. Алёна Анисимова, "Студентсен канашĕ" общество организацийĕн членĕ
55. Мария Анисимова, Çĕмĕрлери 8-мĕш гимнази вĕренекенĕ
56. Дарья Аношина, Улатăр районĕнчи Кувакино вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
57. Василий Антипов, Вăрнар районĕнчи Кӳстӳмĕр вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
58. Ангелина Антонова, Канаш районĕнчи Вăрăмпуç вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
59. Виктория Антонова, Раççей патшалăх социаллă университечĕн Шупашкарти филиалĕн студентки
60. Зинаида Антонова, Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен 1-мĕш спорт шкулĕн вĕренекенĕ
61. Лидия Антонова, Патăрьел районĕнчи ачасен хушма вĕренӳ центрĕн "Ассорти" пĕрлешӳвĕн вĕренекенĕ
62. Надежда Антонова, Элĕкри И.Я.Яковлев ячĕллĕ вăтам шкул вĕренекенĕ
63. Александр Антонов, Çĕнĕ техника кăларакан пĕтĕм тĕнчери инжиниринг компанийĕн тĕп специалисчĕ
64. Иван Антонов, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студенчĕ
65. Евгений Анюров, Патăрьел районĕнчи "Паттăр" спорт шкулĕн вĕренекенĕ
66. Алевтина Арбузова, Олимп резервĕсен Çĕнĕ Шупашкарти училищин вĕренекенĕ
67. Андрей Арсентьев, Муркашри кирпĕч завочĕн ремонтник слесарĕ
68. Роман Артемьев, Çĕрпӳри М.В.Силантьев ячĕллĕ 1-мĕш вăтам шкул вĕренекенĕ
69. Полина Архипова, Чăваш патшалăх культурăпа искусство институчĕн студентки
70. Анна Асланина, Шупашкарти 4-мĕш ачапăча искусство шкулĕн преподавателĕ
71. Анна Атласова, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи "Çеçпĕл" общество организацийĕн "Тантăшлăх" шкул пĕрлĕхĕн членĕ
72. Ирина Афанасьева, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ доценчĕ
73. Клавдия Афанасьева, Олимп резервĕсен Шупашкарти училищин вĕренекенĕ
74. Марина Афанасьева, Чăваш Енри çул çӳревçĕсен союзĕн членĕ
75. Никита Афиногенов, Вăрмарти Г.Е.Егоров ячĕллĕ вăтам шкул вĕренекенĕ
76. Алим Ахмедагаев, РФ ШĔМĕн Шупашкарти управленийĕн участковăйĕ
77. Владимир Ашмарин, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ студенчĕ
78. Светлана Ашуркина, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Хуракасси вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
79. Елена Баженова, Шупашкарти ача-пăча пултарулăх центрĕн методисчĕ
80. Евгений Базин, "Электроавтомат" АУО инженерĕ
81. Никита Байкалов, Шупашкарти ача-пăча пултарулăх центрĕн "Эврика" клуб вĕренекенĕ
82. Ольга Бакина, РФ ШĔМĕн Шупашкарти управленийĕн "Пилеш" полици уйрăмĕн пай пуçлăхĕ
83. Анжелика Балашникова, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ аспирантки
84. Екатерина Баль, Шупашкарти медицина колледжĕн студентки
85. Дарья Баранова, Шупашкарти 44-мĕш лицей вĕренекенĕ
86. Прасковья Баранова, Чăваш патшалăх культурăпа искусство институчĕн студентки
87. Иван Бардасов, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ доценчĕ
88. Екатерина Барышникова, Етĕрне районĕнчи Тури Ачак вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
89. Виктор Беленьков, Улатăр районĕн суйлав комиссийĕ çумĕнчи çамрăксен суйлав комиссийĕн членĕ
90. Анна Белова, "Химпром" АУОн технолог инженерĕ
91. Никита Беловощев, Чăваш Республикинчи хĕвел тухăç çар кĕрешĕвĕн федерацийĕн членĕ
92. Андрей Белов, Чăваш Енри çул çӳревçĕсен союзĕн членĕ
93. Андрей Белов, Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен велоспорт енĕпе В.Ярды ячĕллĕ 7-мĕш спорт шкулĕн вĕренекенĕ
94. Дмитрий Белов, Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен велоспорт енĕпе В.Ярды ячĕллĕ 7-мĕш спорт шкулĕн вĕренекенĕ
95. Леонид Белов, Шупашкарти механикатехнологи техникумĕн студенчĕ
96. Анна Белоногова, Шупашкарти политехника институчĕн студентки
97. Ольга Бельчикова, Шупашкарти халăха ĕçпе тивĕçтерекен центрăн ертсе пыракан инспекторĕ
98. Елена Беспалова, Вырăс драма театрĕн режиссер пулăшуçи
99. Александр Бесчастнов, Шупашкар хулин депутатсен пухăвĕ çумĕнчи çамрăксен парламенчĕн членĕ
100. Анжелика Бикмаева, Шупашкарти электромеханика колледжĕн студентки
101. Марианна Богатнова, Шăмăршă районĕнчи Пуянкасси ял тăрăхĕн çамрăксен канашĕн председателĕн çумĕ
102. Наталия Богатнова, Шăмăршă районĕн суйлав комиссийĕ çумĕнчи çамрăксен суйлав комиссийĕн членĕ
103. Анжелика Богданова, Шупашкарти ачапăча пултарулăх центрĕн методисчĕ
104. Александр Бондарев, Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен самбопа дзюдо спорт шкулĕн вĕренекенĕ
105. Екатерина Борзова, Элĕк ял тăрăхĕн çамрăксен канашĕн членĕ
106. Радий Борисов, "Чăваш Ен студенчĕсем" общество организацийĕн членĕ
107. Александр Боровой, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ студенчĕ
108. Евгений Бочаров, Улатăр районĕнчи Алтышево вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
109. Вадим Брызгин, Шупашкарти политехника институчĕн студенчĕ
110. Анна Буланкова, "Ырлăхпа тăнăçлăх" çамрăк инвалидсен центрĕн Шупашкарти общество организацийĕн членĕ
111. Алина Быкова, Йĕпреç районĕнчи "Агропромкомплект" тулли мар яваплă обществăн ветеринари тухтăрĕ
112. Екатерина Валеева, ЧР ШĔМĕн ÇÇХПИ управленийĕн ушкăн инспекторĕ
113. Марат Валиев, Шăмăршă районĕнчи Палтиел вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
114. Анна Варжина, Çĕмĕрлери ача-пăча пултарулăх центрĕн "Гусары" патриот клубĕн вĕренекенĕ
115. Алевтина Васильева, Шупашкар районĕнчи "Улăп" спорт шкулĕн вĕренекенĕ
116. Александра Васильева, Санкт-Петербург патшалăх экономика университечĕн Шупашкарти филиалĕн студентки
117. Алёна Васильева, Шупашкарти металл шăратакан заводăн цех секретарĕ
118. Анастасия Васильева, Красноармейски вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
119. Анна Васильева, Красноармейски районĕнчи Упи вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
120. Анна Васильева, Красноармейски районĕн ача-пăча пултарулăх центрĕн "Кăмăл" пĕрлешӳ вĕренекенĕ
121. Валентина Васильева, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студентки
122. Валентина Васильева, Муркаш вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
123. Жанна Васильева, Шупашкарти экономика-технологи колледжĕн студентки
124. Людмила Васильева, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУн аслă преподавателĕ
125. Марина Васильева, Çĕнĕ Шупашкарти политехника техникумĕн студентки
126. Марина Васильева, Шупашкар хулин Çамрăксен правительствин членĕ
127. Наталья Васильева, Çĕрпӳри аграри-технологи техникумĕн студентки
128. Ольга Васильева, Мускав гуманитарипе экономика институчĕн Чăваш Енри филиалĕн студентки
129. Ольга Васильева, Чăваш патшалăх академи юрăпа ташă ансамблĕн хор артистки
130. Снежана Васильева, Шупашкарти агрегат завочĕн ертсе пыракан инженерĕ
131. Татьяна Васильева, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студентки
132. Александр Васильев, Вăрнарти ял тăрăхĕсен хушшинчи культурăпа кану центрĕн сасă режиссерĕ
133. Алексей Васильев, Канаш районĕнчи Çĕнĕ Шелттемри ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн вĕренекенĕ
134. Анатолий Васильев, Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен спорт гимнастики енĕпе 6-мĕш спорт шкулĕн тренерĕ
135. Андрей Васильев, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студенчĕ
136. Денис Васильев, Çĕнĕ Шупашкарти 6-мĕш гимнази вĕренекенĕ
137. Дмитрий Васильев, "Коммуналлă технологисем" тулли мар яваплă обществăн сектор пуçлăхĕ
138. Дмитрий Васильев, Чăваш Енри çул çӳревçĕсен союзĕн членĕ
139. Евгений Васильев, Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен спорт гимнастики енĕпе 6-мĕш спорт шкулĕн вĕренекенĕ
140. Илья Васильев, Шупашкарти 55-мĕш вăтам шкул вĕренекенĕ
141. Лев Васильев, Пăрачкав районĕнчи хресчен-фермер хуçалăхĕн пуçлăхĕ
142. Михаил Васильев, Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен 3-мĕш спорт шкулĕн вĕренекенĕ
143. Сергей Васильев, Сĕнтĕрвăрринчи 1-мĕш гимнази вĕренекенĕ
144. Оксана Вhouseholdструшкина, Çĕмĕрле районĕнчи вĕренӳ тытăмĕнче ĕçлекенсен çамрăксен канашĕн членĕ
145. Леонтий Вастулов, Шупашкарти металл шăратакан заводăн электромонтерĕ
146. Павел Васюков, ЧР Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерствин тĕп эксперт специалисчĕ
147. Яна Васюткина, Патăрьелти 2-мĕш вăтам шкул вĕренекенĕ
148. Диляра Вахитова, Йĕпреçри 1-мĕш вăтам шкул вĕренекенĕ
149. Диана Велиева, Шупашкарти экономика-технологи колледжĕн студентки
150. Дмитрий Верещагин, ЧР ШĔМĕн референчĕ
151. Дмитрий Вериялов, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУн студенчĕ, аспирантсемпе ординаторсен пĕрремĕшле профсоюз организацийĕн членĕ
152. Иван Веселовский, ЧР ШĔМĕн аслă оперуполномоченнăйĕ
153. Сергей Викторов, Шупашкарти ӳнер училищин вĕренекенĕ
154. Евгения Виноградова, Ачасемпе çамрăксен пултарулăхне аталантаракан А.И.Андрианов ячĕллĕ центр педагогĕ
155. Мария Виюк, Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕн артистки
156. Анастасия Владимирова, "Раççейри студентсен отрячĕсем" общество организацийĕн членĕ
157. Екатерина Владимирова, Çĕнĕ Шупашкарти 5-мĕш вăтам шкул вĕрентекенĕ
158. Наталия Владимирова, Тăвай районĕнчи Çĕнĕ Пуянкасси вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
159. Ольга Возякова, Шупашкарти "Салют" культура керменĕн "Раздолье" ансамблĕн ертӳçи
160. Ирина Волкова, Шăмăршă вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
161. Алексей Волков, Г.А.Ильенко ячĕллĕ "Элара" ăслăлăх-производство комплексĕн технолог инженерĕ
162. Дарья Володина, Сĕнтĕрвăрринчи 1-мĕш гимнази вĕренекенĕ
163. Татьяна Володина, Вырăс патшалăх драма театрĕн артистки
164. Ирина Воробьева, Шупашкарти промышленноç тракторĕсем тăвакан заводăн экономисчĕ
165. Алексей Воронов, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи "Нива" ЯХПКн тĕп агрономĕ
166. Павел Воронов, "Бреслер" тĕпчев центрĕн тĕпчевçĕ инженерĕ
167. Диана Габсаттарова, Шупашкарти экономика-технологи колледжĕн студентки
168. Евгения Гаврилова, Çĕнĕ Шупашкарти "Юман" общество организацийĕн членĕ
169. Екатерина Гаврилова, Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен В.Н.Кочков ячĕллĕ 5-мĕш спорт шкулĕн вĕренекенĕ
170. Кристина Гаврилова, Вăрнарти ял хуçалăх техникумĕн студентки
171. Надежда Гаврилова, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ студентки
172. Юлия Гаврилова, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ студентки
173. Динар Гайнуллов, Шупашкарти кооперации институчĕн студенчĕ
174. Дмитрий Галяутдинов, Çĕнĕ Шупашкарти политехника техникумĕн студенчĕ
175. Елена Георгиева, Канаш районĕнчи ял тăрăхĕсен хушшинчи тĕп библиотекăн пай пуçлăхĕ
176. Елена Герасимова, Олимп резервĕсен Шупашкарти училищин вĕренекенĕ
177. Елена Глушко, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ студентки
178. Елизавета Голева, Шупашкарти Ф.Павлов ячĕллĕ музыка училищин вĕренекенĕ
179. Денис Головин, Шупашкарти политехника институчĕн студенчĕ
180. Екатерина Горбунова, Çĕнĕ Шупашкарти 12-мĕш вăтам шкул вĕренекенĕ

/Малалли 5-мĕш стр./.

# Кăçалхи стипендиатсем

/Малалли. Пуçламăшĕ 4-мĕш стр./.

181. Екатерина Гордеева, "Пĕрлĕхлĕ Раççейĕн Çамрăк Гвардийĕ" общество организацийĕн Чăваш Енри уйрăмĕн членĕ
182. Екатерина Гордеева, Шупашкарти медицина колледжĕн Канашри филиалĕн студентки
183. Ксения Гордеева, Шупашкарти кооператив институчĕн аспирантки
184. Елена Горшкова, Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен 1-мĕш спорт шкулĕ
185. Алина Григорьева, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студентки
186. Ирина Григорьева, Муркаш районĕн "Сывлăх" спорт шкулĕн вĕренекенĕ
187. Наталья Григорьева, "Раççейри студентсен отрячĕсем" общество организацийĕн членĕ
188. Ольга Григорьева, ЧР ветеринари лабораторийĕн ветеринари тухтăрĕ
189. Светлана Григорьева, Шупашкарти металл шăратакан заводăн ĕçченĕ
190. Адай Григорьев, Г.А.Ильенко ячĕллĕ "Элара" ăслăлăх-производство комплексĕн конструктор инженерĕ
191. Александр Григорьев, Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен 3-мĕш спорт шкулĕн вĕренекенĕ
192. Юрий Григорьев, Канаш районĕнчи Хучел тĕп шкулĕн вĕренекенĕ
193. Анастасия Гришина, Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен 2-мĕш спорт шкулĕн вĕренекенĕ
194. Лейсан Губайдуллина, Патăрьел районĕнчи Алманчă вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
195. Елена Гусева, Патăрьел районĕнчи Аслă Арапуç ял тăрăхĕн çамрăксен канашĕн членĕ
196. Вера Давыдова, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студентки
197. Людмила Давыдова, Шупашкарти "Караш" экологи-биологи центрĕн педагогĕ
198. Надежда Давыдова, "Чăваш Ен" ПТРКн студи редакторĕ
199. Дмитрий Давыдов, ЧР ШĔМĕн оперуполномоченнăйĕ
200. Армен Даниелян, Мускав патшалăх автомобильпе çул-йĕр техника университечĕн Атăлçи филиалĕн студенчĕ
201. Виктория Данилова, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студентки
202. Дарья Данилова, Трак вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
203. Елена Данилова, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ пай пуçлăхĕ
204. Инна Данилова, "Хыпар" хаçат корректорĕ
205. Ольга Данилова, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ студентки
206. Яков Данилов, Тăвайри ача-пăча искусство шкулĕн вĕренекенĕ
207. Наталия Дедушкина, Раççей патшалăх социаллă университечĕн Шупашкарти филиалĕн студентки
208. Мария Дементьева, Шупашкарти кооператив институчĕн студентки
209. Анастасия Демидова, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ студентки
210. Анастасия Денисова, Вăрнарти ял хуçалăх техникумĕн студентки
211. Анастасия Дерябина, Çĕмĕрлери 8-мĕш гимнази вĕренекенĕ
212. Анжелика Димитриева, Шупашкарти экономика-технологи колледжĕн студентки
213. Вероника Димитриева, "Çемье кредичĕ" пулăшу кассин ертсе пыракан кассир инспекторĕ
214. Надежда Димитриева, Муркаш районĕнчи Çатракасси вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
215. Денис Димитриев, Çĕрпӳри аграри-технологи техникумĕн студенчĕ
216. Роман Димитриев, Тăвай вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
217. Сергей Димитриев, Муркаш районĕнчи ача-пăча пултарулăх центрĕн вĕренекенĕ
218. Ксения Дмитриева, Республикăри сусăр ачасемпе çамрăксен реабилитаци центрĕн логопечĕ
219. Евгений Дмитриев, Олимп резервĕсен Шупашкарти училищин вĕренекенĕ
220. Евгений Добронравов, "Бреслер" тĕпчев центрĕн тĕпчевçĕ инженерĕ
221. Карина Долгова, "Пĕрлĕхлĕ Раççейĕн Çамрăк гвардийĕ" общество организацийĕн Чăваш Енри уйрăмĕн членĕ
222. Николай Долматов, ЧР баскетбол федерацийĕн членĕ
223. Александра Доманина, Куславкка районĕнчи суйлав комиссийĕн 342-мĕш участок председатель çумĕ
224. Илья Дюжев, Шупашкарти экономика-технологи колледжĕн студенчĕ
225. Анастасия Дядькина, Красноармейскинчи суйлав комиссийĕ çумĕнчи çамрăксен суйлав комиссийĕн членĕ
226. Святослав Евграфов, Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн студенчĕ
227. Екатерина Евдокимова, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУн центр пуçлăхĕ
228. Алина Егорова, ЧР ШĔМĕн специалисчĕ
229. Мария Егорова, Кӳкеç лицейĕн вĕренекенĕ
230. Наталия Егорова, ЧР патшалăх электрон тата кинодокументаци архивĕн тĕп архивисчĕ
231. Ольга Егорова, Шупашкарти экономика-технологи колледжĕн студентки
232. Полина Егорова, Шăмăршă вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
233. Татьяна Егорова, Çĕмĕрле районĕнчи Егоркино вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
234. Юлия Егорова, "Чăваш Ен студенчĕсем" общество организацийĕн членĕ
235. Юлия Егорова, Çĕмĕрлери 1-мĕш ача-пăча искусство шкулĕн вĕренекенĕ
236. Алексей Егоров, Патăрьел районĕнчи Сăкăт ял тăрăхĕн çамрăксен канашĕн членĕ
237. Василий Егоров, Элĕк районĕнчи Ю.Н.Никифоров хресчен-фермер хуçалăхĕн механизаторĕ
238. Дмитрий Егоров, Шупашкарти агрегат завочĕн участок мастерĕ
239. Анастасия Едифанова, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студентки
240. Евгений Еливанов, Шупашкарти политехника институчĕн студенчĕ
241. Елена Елизарова, Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен ухăран перес енĕпе И.Солдатова ячĕллĕ спорт шкулĕн инструкторĕ
242. Роман Емельянов, Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн студенчĕ
243. Сергей Емельянов, РФ ШĔМĕн Шупашкарти управленийĕн полицин 2-мĕш уйрăмĕн пай пуçлăхĕ
244. Татьяна Енцова, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Хуракасси вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
245. Елизавета Еремеева, Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн студентки
246. Оксана Еремеева, Етĕрне районĕнчи Чирĕккасси вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
247. Кристина Ермолаева, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУн студентсен, аспирантсемпе ординаторсен пĕрремĕшле профсоюз организацийĕн членĕ
248. Борис Ерофеев, РФ ШĔМĕн Шупашкарти управленийĕн специалисчĕ
249. Анна Ершова, Социаллă пулăшу паракан центрăн ертсе пыракан эксперт специалисчĕ
250. Анастасия Ефанова, Муркаш вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
251. Дмитрий Ефаров, Улатăрти автомобильпе çул-йĕр техникумĕн студенчĕ
252. Дина Ефимова, Шупашкарти 2-мĕш гимнази вĕренекенĕ
253. Ирина Ефимова, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Карапаш ял тăрăхĕн культурăпа библиотека ĕçĕ-хĕлĕн центрĕн кружок ертӳçи
254. Татьяна Ефимова, "Гвардеец" общество организацийĕн членĕ
255. Алексей Ефимов, ЧР Тĕп суйлав комиссийĕ çумĕнчи çамрăксен суйлав комиссийĕн председателĕ
256. Дмитрий Ефимов, Олимп резервĕсен Çĕнĕ Шупашкарти училищин вĕренекенĕ
257. Станислав Ефимов, Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен 1-мĕш спорт шкулĕн вĕренекенĕ
258. Оксана Ефремова, Шупашкар районĕнчи Шĕнерпуç культура çурчĕн илемлĕх ертӳçи
259. Андрей Ефремов, Элĕк ял тăрăхĕн çамрăксен канашĕн членĕ
260. Вячеслав Жгарь, Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕн хор артисчĕ
261. Юлия Жданович, Çĕмĕрлери ача-пăча пултарулăх çурчĕн педагогĕ
262. Анастасия Желонкина, Шупашкарти хими-механика техникумĕн студентки
263. Елена Жеребцова, Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕн хор артистки
264. Елизавета Жестянова, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студентки
265. Константин Живулин, "Çеçпĕл" ансамблĕн вокал артисчĕ
266. Диана Жукова, Шупашкарти экономика-технологи колледжĕн студентки
267. Владислав Жуков, Хĕрлĕ Чутайри ача-пăча искусство шкулĕн вĕренекенĕ
268. Анна Журавлева, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ аспирантки
269. Мария Забалухина, Çĕнĕ Шупашкарти 10-мĕш шкул вĕрентекенĕ
270. Мария Зайцева, Шупашкар хулин депутатсен пухăвĕ çумĕнчи Çамрăксен парламенчĕн членĕ
271. Максим Зайцев, Шупашкарти политехника институчĕн студенчĕ
272. Ленар Залалтдинов, Раççей ШĔМĕн Патăрьел районĕнчи уйрăмĕн Шăмăршăри инспекторĕ
273. Ирина Запасова, Элĕкри И.Я.Яковлев ячĕллĕ вăтам шкул вĕренекенĕ
274. Андрей Зарубин, Чăваш наци музейĕн ăслăлăх сотрудникĕ
275. Кристина Захарова, Çĕрпӳ районĕнчи Чурачăк вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
276. Людмила Захарова, Шупашкарти 125-мĕш ача сачĕн воспитателĕ
277. Ольга Захарова, Шупашкар районĕн ача-пăча пултарулăх центрĕн вĕренекенĕ
278. Анастасия Зиновьева, Раççей патшалăх социаллă университечĕн Шупашкарти филиалĕн студентки
279. Андрей Золотарев, "Химпром" АУО мастерĕ
280. Алексей Зотиков, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ ассистенчĕ
281. Екатерина Зотова, Патăрьел районĕнчи Аслă Чемен вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
282. Алёна Иванова, Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн студентки
283. Анастасия Иванова, Красноармейски вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
284. Валентина Иванова, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ студентки
285. Виктория Иванова, Чăваш Республикинчи пĕрлештернĕ командăсене хатĕрлекен А.Игнатьев ячĕллĕ спорт центрĕн спортсменĕ
286. Диана Иванова, Тăвай районĕнчи Йăнтăрчă вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
287. Евгения Иванова, Шупашкарти харпăр усламçă
288. Екатерина Иванова, Çĕмĕрлери "Олимп" спорт шкулĕн тренерĕ
289. Елена Иванова, Ачасемпе çамрăксен пултарулăхне аталантаракан А.И.Андрианов ячĕллĕ центрăн "Макси" студи вĕренекенĕ
290. Елена Иванова, Вăрмар районĕнчи Пысăк Енккасси вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
291. Елизавета Иванова, Çĕмĕрлери 6-мĕш вăтам шкул вĕренекенĕ
292. Зинаида Иванова, Вăрнар районĕнчи 2-мĕш вăтам шкул вĕрентекенĕ
293. Кристина Иванова, Патăрьел районĕнчи Аслă Чемен вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
294. Людмила Иванова, Элĕк район администрацийĕн специалисчĕ
295. Надежда Иванова, Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн студентки
296. Надежда Иванова, Шăмăршă вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
297. Татьяна Иванова, Санкт-Петербург патшалăх экономика университечĕн Шупашкарти филиалĕн аслă преподавателĕ
298. Ульяна Иванова, Шупашкарти хими-механика техникумĕн студентки
299. Элина Иванова, Елчĕк районĕнчи Кĕçĕн Таяпа тĕп шкулĕн вĕренекенĕ
300. Александр Иванов, РФ ШĔМĕн Шупашкарти управленийĕн изолятор дежурнăйĕн пулăшуçи
301. Александр Иванов, РФ Правительстви çумĕнчи финанс университечĕн Канашри филиалĕн студенчĕ
302. Алексей Иванов, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ аспиранчĕ
303. Алексей Иванов, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студенчĕ
304. Андрей Иванов, РФ ШĔМĕн Шупашкарти управленийĕн уйрăм инспекторĕ
305. Андрей Иванов, Етĕрнери 2-мĕш вăтам шкул вĕренекенĕ
306. Артем Иванов, Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен 3-мĕш спорт шкулĕн вĕренекенĕ
307. Василий Иванов, Чăваш патшалăх академи драма театрĕн артисчĕ
308. Владислав Иванов, Шупашкарти А.И.Трофимов ячĕллĕ 30-мĕш вăтам шкул вĕрентекенĕ
309. Вячеслав Иванов, Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен В.Н.Кочков ячĕллĕ 5-мĕш спорт шкулĕн вĕренекенĕ
310. Григорий Иванов, Шупашкарти строительствăпа хула хуçалăх техникумĕн студенчĕ
311. Дмитрий Иванов, Шупашкарти электромеханика колледжĕн студенчĕ
312. Дмитрий Иванов, Шупашкарти политехника институчĕн студенчĕ
313. Дмитрий Иванов, Вăрмар районĕнчи Н.А.Иванов хресчен-фермер хуçалăхĕн тракторисчĕ
314. Евгений Иванов, Шупашкарти политехника институчĕн студенчĕ
315. Егор Иванов, Элĕкри И.Я.Яковлев ячĕллĕ вăтам шкул вĕренекенĕ
316. Максим Иванов, "Текстильщик" ертсе пыракан компанин энергетик инженерĕ
317. Олег Иванов, Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен самбопа дзюдо спорт шкулĕн вĕренекенĕ
318. Петр Иванов, ЧР ШĔМĕн боецĕ
319. Роман Иванов, Олимп резервĕсен Çĕнĕ Шупашкарти училищин вĕренекенĕ
320. Надежда Иванцова, Шупашкарти кооператив институчĕн студентки
321. Анна Игнатьева, Тăвай вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
322. Кристина Игнатьева, ЧР культура училищин вĕренекенĕ
323. Олеся Игнатьева, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студентки
324. Сергей Игнатьев, Шупашкарти агрегат завочĕн аслă мастерĕ
325. Михаил Иевлев, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студенчĕ
326. Елена Ижуткина, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студентки
327. Ирина Илларионова, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУн студентсен, аспирантсемпе ординаторсен пĕрремĕшле профсоюз организацийĕн членĕ
328. Кристина Илларионова, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУн студентсен, аспирантсемпе ординаторсен пĕрремĕшле профсоюз организацийĕн членĕ
329. Александр Илларионов, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ студенчĕ
330. Иван Илларионов, Канашри транспорт-энергетика техникумĕн производство вĕрентĕвĕн мастерĕ
331. Алексей Ильбеков, Шупашкарти агрегат завочĕн производство пуçлăхĕ
332. Анастасия Ильина, «Трактор завочĕсем» концерн ертӳçин пулăшуçи
333. Анастасия Ильина, «Раççейри студентсен отрячĕсем» общество организацийĕн членĕ
334. Ирина Ильина, Пăрачкаври И.Н.Ульянов ячĕллĕ ача çурчĕн вĕренекенĕ
335. Кристина Ильина, Канаш районĕнчи Вырăскас Пикших вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
336. Олеся Ильина, Шупашкарти машиностроени техникумĕн студентки
337. Геннадий Ильин, РФ ШĔМĕн Канаш хулинчи уйрăмĕн полицейскийĕ
338. Николай Ильин, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студенчĕ
339. Юлия Илюткина, ЧР Экономика министерствин ертсе пыракан эксперт специалисчĕ
340. Ольга Индейкина, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ аспирантки
341. Любовь Иноходова, Олимп резервĕсен Шупашкарти училищин вĕренекенĕ
342. Анатолий Иноходов, Олимп резервĕсен Шупашкарти училищин вĕренекенĕ
343. Дарья Ионова, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ аспирантки
344. Марина Исаева, Санкт-Петербург патшалăх политехника университечĕн Шупашкарти филиалĕн аслă преподавателĕ
345. Артур Исаев, Красноармейски районĕнчи ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн вĕренекенĕ
346. Тимофей Исаков, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студенчĕ
347. Алексей Исланов, Шупашкарти хими-механика техникумĕн студенчĕ
348. Асад Исса, Олимп резервĕсен Çĕнĕ Шупашкарти училищин вĕренекенĕ
349. Светлана Иссакова, В.И.Чапаев ячĕллĕ производство пĕрлешĕвĕн технолог инженерĕ
350. Анна Ишмуратова, Шупашкарти экономика-технологи колледжĕн студентки
351. Артем Йовенко, «Студентсен канашĕ» общество организацийĕн ертӳçин çумĕ
352. Елена Кабакова, Шупашкарти транспорт-строительство технологийĕсен техникумĕн студентки
353. Юлия Кабырева, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ студентки
354. Алёна Казанцева, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студентки
355. Лусабер Калачян, Шупашкарти кооператив институчĕн студентки
356. Гульнара Калмыкова, Патăрьелти суйлав комиссийĕ çумĕнчи çамрăксен суйлав комиссийĕн членĕ
357. Мария Карасева, Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен гимнастика енĕпе ятарлă спорт шкулĕн тренерĕ
358. Федор Карзанов, Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен В.Н.Кочков ячĕллĕ 5-мĕш спорт шкулĕн тренерĕ
359. Анна Карпова, «Кредо» турклуб вĕренекенĕ
360. Елена Карпова, Пăрачкав районĕн культура çурчĕн пай ертӳçи
361. Сергей Карпов, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУн аслă преподавателĕ
362. Максим Карсаков, Чăваш патшалăх культурăпа искусство институчĕн студенчĕ
363. Наталия Картмасова, Шупашкарти 2-мĕш лицей вĕренекенĕ
364. Андрей Касевич, Шупашкарти металл шăратакан заводăн конструктор инженерĕ
365. Зинаида Катыкова, Шупашкарти агрегат завочĕн технолог инженерĕ
366. Надежда Каштанова, Патăрьелти 1-мĕш вăтам шкул вĕренекенĕ
367. Наталья Кедярова, ЧР патшалăх ветеринари службин аслă инспекторĕ
368. Полина Кенюх, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ концертмейстерĕ
369. Александр Кержаев, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ аспиранчĕ
370. Игорь Киреев, Г.А.Ильенко ячĕллĕ «Элара» ăслăлăх-производство комплексĕн инженерĕ
371. Ангелина Кириллова, Çĕмĕрлери политехника техникумĕн студентки

/Малалли 6-мĕш стр./.

# Кăçалхи стипендиатсем

/Малалли. Пуçламăшĕ 4-5-мĕш стр./.

372. Кристина Кириллова, «АБС Русь» АХОн Шупашкарти филиалĕн специалисчĕ
373. Кристина Кириллова, Олимп резервĕсен Шупашкарти училищин вĕренекенĕ
374. Марина Кириллова, Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен ухăран перес енĕпе И.Солдатова ячĕллĕ спорт шкулĕн вĕренекенĕ
375. Марина Кириллова, Канаш районĕнчи Вырăскас Пикших вăтам шкулĕн вĕренекенĕ
376. Олеся Кириллова, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ студентки
**Ту качаки.** Пуçлăхăра ĕмĕт-тĕллевĕрпе паллаштарăр, вĕсене пурнăçа кĕртмешкĕн тăрăшăр. Вăй-хал тапса тăнине туятăр-и? Апла тăк кирек мĕнле ĕçе те пуçăнма пултаратăр – телей кайăкĕ аларан вĕçерĕнмĕ. Канмалли кунсене пĕчченлĕхре ирттерни пулни-иртнине тишкерме май парĕ.



**Шыв тăкан.** Пысăк проектсене пăхса тухнă чухне, килĕшӳсене алă пуснă самантра тимлĕхе ан çухатăр – ахăртнех, сире шăнман пăр çине лартса хăварма хăтланĕç. Тахçанхи пĕлĕшĕрсемпе тĕл пулмашкăн, телефонпа çыхăнмашкăн ăнăçлă самант. Кĕтмен çĕртен сиксе тухнă ыйтусем вара унччен тунă йăнăшсем пирки аса илтерĕç.



**Пулăсем.** Пĕлĕшĕрсен ăсталăхĕнчен, вĕсен тапса тăракан вăй-хăватĕнчен тĕлĕнетĕр-и? Çитес вăхăтрах çаксккерсемпе чуна уçса калаçма май пулĕ. Пултарулăхăра ыттисене кăтартас килет-и? Конкурентсемпе ăмăртса ĕçлеме тивессине ан манăр. Ахăртнех, пурнăçăрта кăмăллă улшăнусем пулĕç.

# Çанталăк



| кăнтăрла | | çĕрле |
|---|---|---|
| 17.01 | – 10 | – 12 |
| 18.01 | – 14 | – 18 |
| 19.01 | – 20 | – 21 |
| 20.01 | – 20 | – 22 |
| 21.01 | – 14 | – 22 |
| 22.01 | – 19 | – 22 |
| 23.01 | – 20 | – 20 |

# Юратупа

## КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ



# Ашкăнчăк тусăм ирĕклĕхе кăмăллать

Сирĕн хаçата мĕн сăлтавпа çыратăп-ха? Çук, хам пирки каласа кăтартасшăн мар эпĕ. Манăн пĕтĕмпех йĕркеллĕ: савнă упăшка, икĕ ача, пурăнмалли кĕтес пур. Тусăмăн шăпи пăшăрхантарать. Ним тума аптăранă енне «Юратупа наркăмăша» çырас терĕм. Тен, сĕнӳ паракан тупăнĕ, мĕншĕн тесен мĕн тумаллине те пĕлместĕп, алă усăнчĕ.

Варварăпа пĕрле выляса ӳсрĕмĕр. Вăл пирĕн кӳршĕччĕ. Варя пĕчĕк чухнех питĕ илĕртӳллĕ сăнлăччĕ. «Кĕл пике» тесе чĕнетчĕ ашшĕ-амăшĕ пĕртен пĕр ачине. Чăнах та, Варьăна юмахри çак сăнарпа танлаштарма пулатчĕ. Хĕр пĕвне кĕрсен пушшех чиперленчĕ. Çырă çӳçĕ кăтраланса-авкаланса пилĕкĕ таранах çитетчĕ. Эпĕ ун çумĕнче шурă курак евĕрехчĕ. Сăн-питĕмпе мухтанмаллиех çук, çапах чи çывăх тусăма нихăçан та ăмсанмастăм. Каччăсем манпа мар, унпа паллашма кăмăл тусан та тута тăсмастăм. 10-11-мĕш классенче вĕреннĕ чухне Варвара çумне чылай йĕкĕт çулăхрĕ. Клуба тухсан унпа самаях аслисем те пырса калаçатчĕç. Варьăна вара ку килĕшетчĕ. Каччăсем çулăхни ăна савăнтаратчĕ. Сăпайлăх мĕнне мансах ихĕлтететчĕ. Хăш чухне пĕр-пĕр каччăпа клуб хыçне каятчĕ те ман пирки манатчĕ. Киле пĕччен таврăнни темиçе хут та пулнă. Варя хăйĕн илемĕпе усă куратчĕ. Паян пĕр йĕкĕтпе калаçатчĕ, ыран – тепринпе, виçмине – тата урăххипе. Вăл чун саваканнине тупма, унпа çеç вăхăта ирттерме пĕлмерĕ, тӳперен çĕр çине анма васкамарĕ. Пĕррехинче клубран пĕрле таврăнтăмăр.

– Коля – во! Унăн автомашина пур. Паян ярăнтарчĕ, – терĕ вăл.

– Эсĕ ĕнер кăна Петя чи лайăххине ĕнентертĕн-çке. Паян вара – Коля, – тĕлĕннĕ пек турăм эпĕ. Тĕрĕссипе, Варя хăтланăвĕсенчен тĕлĕнме те пăрахнăччĕ ĕнтĕ. Тусăма тӳрĕ çул çине кăларас килчĕ, анчах кун пирки мĕнле каламаллине пĕлмерĕм.

– Петя пирки паян ирхинех маннă. Мĕн вăл – каччăсем? Çамрăк чухне вĕсемпе усă курмалла. Паян пĕринпе паллашмалла та ыран урăххине тупмалла. Иртнине çӳп-çап евĕр кăларса ывăтмалла.

Сăмах чĕнейми пултăм. Чĕлхе çыхланнăран калаçăва тепĕр енне пăртăм. Вăхăт шурĕ. Варвара вара улшăнмарĕ. Каччăсене çаплипех перчетке евĕр улăштарчĕ. Шкултан вĕренсе тухсан пĕр университетра ăс пухма тытăнтăмăр, пĕр пӳлĕмре пурăнтăмăр. Варя ирĕклĕхе туйсан пушшех харсăрланчĕ. Кашни кун тенĕ пекех каçхи клубра çухалса çӳрерĕ. Мана та хăйĕн хыççăн сĕтĕрчĕ, анчах унта пĕрре кайрăм та тек ура ярса пусмарăм.

Пĕррехинче ялтан яланхилле юлашки рейспа мар, пиччесемпе машинăпа иртерех килтĕм. Пӳлĕме кĕрсен тăпах чарăнса тăтăм. Куç-пуç алчăраса кайрĕ, сывлама та мантăм. Вырăн çинче Варвара темĕнле каччăпа алхасать! Çухалса кайрăм: те тĕпеле иртмелле, те каялла чакмалла. Варя сиксе тăчĕ те арпашăна-арпашăна темĕнле сăмахсем каласа тӳрре тухма тăрăшрĕ. Каччă тăхăннă-тăхăнман пӳлĕмрен вирхĕнсе тухрĕ.

– Варя, эсĕ мĕскер? Мĕн хăтланатăн? Тасалăхна пĕтертĕн... Айван... – ыталарăм тусăма.

– Ну култаратăн эсĕ! – ахăлтатрĕ Варвара. – Вăран! Урамра – XXI ĕмĕр. Эпĕ ялти клуб хыçĕнче мĕн туса çӳренĕ тетĕн? Мишăпа, Сашăпа...

Тĕлĕннипе шанк хытса тăтăм. Ку манăн чăннипех те кĕтменлĕх пулчĕ. Ара, хĕрĕн качча кайиччен çапла асса çӳремелле-им? Варя калани пуçа вырнаçмарĕ.

– Варя, ăнлан: ку ырри патне илсе çитермест. Ӳкĕнĕн кайран. Пулас упăшку çакна пĕлсен хисеплĕ-и? – ăса кĕртме тăрăшрăм тусăма. Кăлăхах. Варварăна эпĕ каланă пĕр сăмах та витĕм кӳмерĕ. Тусăм каччăсен аллинчи тетте пулса тăчĕ, анчах вăл çакна ăнланмарĕ. Йăнăш çулпа утакан Варьăпа çыхăнăва татмарăм, ăна шеллерĕм. Вăл çут çанталăк панă илеме упраймарĕ: вăйлă сăрланма тытăнчĕ, çырă çӳçне саратрĕ. Эпĕ кĕçех качча тухрăм. Упăшка манăн тасалăха хакларĕ. Халĕ те вăл мана алă çинче йăтса çӳременни çеç.

Варя шăрчăк пек сиккеленĕ хыççăн пĕр каччăна çавăрчĕ. Влад меммерехчĕ. Паллах, вăл Варьăн иртнĕ пурнăçĕ пирки пĕлместчĕ. Влад тусăма качча илчĕ. Варя çемье çавăрсан лăпланĕ пулĕ тенĕччĕ. Чăнах та, малтанлăха клуба çӳреме пăрахрĕ, вăхăта ытларах Владпа ирттерчĕ. Упăшки ача пирки ĕмĕтленетчĕ, анчах Варя амăшĕ пулма васкамарĕ.

– Эпĕ, мĕн, халех сăпка сиктерме ухмах-им? 28-та кăнаха. Ача çуралсан ирĕклĕх çухалĕ, – вăрттăнлăхне уçрĕ вăл мана.

– Варя, ача – телей. Пепке çуралсан çеç çакна ăнланăн, ĕненсем, – терĕм эпĕ, тинтерех ывăл çуратнăскер. Çук, çак сăмахсене ăса хывмарĕ. Кĕçех Варьăна çемье пурнăçĕ те йăлăхтарчĕ. Ăмăрт кайăк пек ирĕклĕхе юратаканскер хваттерте хăйне читлĕхри пек туйма тытăнчĕ. Тусăм Владран ресторан-кафене вăрттăн çӳреме пуçларĕ. Унта арçынсемпе тĕл пулнине пĕлеттĕм. Анчах кампа? Чухламастăм. Вăрттăнлăх çиеле тухрĕ. Варя Владăн юлташĕсемпе тĕл пулнă иккен. Кун пирки Влад пĕлтерчĕ. Пĕррехинче вăл кафере Варьăна хăйĕн тусĕпе ларнине курнă, вĕсене сыхлама шухăшланă. Лешсем вăхăтлăха тара илнĕ хваттере çул тытнă. Влад – вĕсем хыççăн. Хĕрнĕскерсем хваттер алăкне те питĕрме ĕлкĕреймен – вырăн ăшне чăмнă. Çакна курсан Владăн меммелĕхĕ те таçта çухалнă. Хайхискер шăв-шав çĕкленĕ, тĕк вĕçтернĕ. Кун хыççăн вăл Варьăна килтен хăваласа кăларса ячĕ, унран уйрăлчĕ. Пĕр кунхине пирĕн пата килсе чунне уçрĕ. Влада шеллетĕп. Лайăх арçын вăл. Ăнланатăп: чунĕ вутпа ăшаланать. Пĕрремĕшĕнчен, ăна юратнă арăмĕ юттипе улталарĕ. Иккĕмĕшĕнчен, вăл юлташ вырăнне йышăннă çынсем сутăнчăк пулса тăчĕç. Влад пĕччен тăрса юлчĕ. Питĕ кулянать, ĕç хыççăн хваттер алăкне питĕрет те никампа та хутшăнмасть. Варвара вара Владран уйрăлнăшăн пĕр чĕптĕм те кулянмарĕ. Пачах тепĕр май, ирĕклĕ пурнăçпа савăнать çеç вăл. Арçынсемпе ашкăнса çӳресе ят-сумне вараларĕ. Ăна тӳрĕ çул çине мĕнле тăратмалла-ши? «Мĕн тума кирлĕ вăл сана?» – тейĕ хăшĕ-пĕри. Çук, ачаранпа туслă ӳснĕ Варьăна пулăшас килет.

**КСЕНИЯ.**
Канаш хули.

**ЧУНРИ**

# Упăшка апат тиркет

Салам пурне те! Алла хутпа ручка тытиччен нумай шухăшларăм. Упăшка палласа илĕ тĕк? Çырас-ши е çук-ши?.. Мĕн пулать те мĕн килет – шурă хута варалама лартăм. «Юратупа наркăмăшри» çырусене кашнинчех тĕпĕ-йĕрĕпе вулатăп. Чылайшĕ юратупа туслăх пирки шăрçалать. Тунмастăп: вĕри çак туйăмсем чĕрене çунтараççĕ, пăшăрхантараççĕ. Мана упăшка канăçсăрлантарать. «Юрату суккăр», – тени тĕрĕсех иккен. Юрккăна качча тухиччен куç ăçталла пăхнă-ши? Хăлха мĕн итленĕ-ши?

Унпа ăнсăртран паллашрăм. Ун чухне хĕр тусăмăн çуралнă кунне кайнăччĕ. Палламан çын нумайччĕ. Каччă та самайччĕ. Пурте тенĕ пекех мăшăрсăрччĕ. Пӳлĕме кĕрсенех йĕри-тавра пăхса çаврăнтăм, хам валли каччă суйларăм. Кĕтесре сарă çӳçлĕ йĕкĕт ларатчĕ. Пĕрре пăхсан – илемлĕ пек. Анчах унăн сăмси куракăнни пек мăкăрăлса тăрать. «Çук, ун патне пымăп», – мĕлтлетрĕ шухăш пуçра. Малалла тинкертĕм. Чӳрече патĕнче хура çӳçлĕ каччă тăратчĕ. Илемлĕ хăй, анчах чĕлĕм мăкăрлантарать. Фу-у-у, ăна качча тухсан ĕмĕрĕпех тĕтĕм-сĕрĕм ăшĕнче пурăнмалла-им? Çу-у-ук, кун пек телей кирлĕ мар. Сĕтел хушшинче çырă çӳçлĕ, питĕ илемлĕ йĕкĕт пĕр хускалмасăр ларатчĕ. Мĕн пулнă ăна? Палăк тейĕн. Сывлать-и вăл? Чим-ха, мĕн амакĕ ку? Хайхискер тăруках сулăнса кайрĕ те пичĕпе турилккери салата тăрăнчĕ. Уяв пуçланнă-пуçланман кӳпсе лартнă. Мĕскĕн... Ĕçме пĕлмест, шăршипех йăванса каять пулсан аллине черкке мĕншĕн тытать-ши? «Ĕçкĕçпе ĕмĕр ĕмĕрлес килмест», – шухăшларăм ăшăмра. Куç Юркка çине тăрăнчĕ. Тӳрех ăнлантăм – вăл манăн пулĕ. Ăна курсан чĕрем пĕрре вырăнне иккĕ тапма тытăнчĕ. Çав каç Юркка çумне куршанак пек çыпăçрăм та тек хăпмарăм. Эпĕ хамăн телее алăран вĕçертекен çын мар. Тĕллеве пурнăçларăм. Юрккăпа çӳреме тытăнтăмăр.

Савнипе ирттернĕ вăхăт чĕлхе çинчи пыл пек туйăнчĕ. Юркка хĕр кăмăлне тупма пĕлетчĕ: чечек çыххипе, парнесемпе час-часах савăнтаратчĕ. Ун чухне унăн çитменлĕхĕсене асăрхамастăм.

– Арçын чĕри патне апат урлă çул тупмалла. Ас ту: Юрккăн хырăмлăхĕ мăклашкаллă, – терĕ пĕррехинче савнин чи çывăх юлташĕ. Çак сăмахсен пĕлтерĕшне сăмса çине картса хумарăм.

– Мĕн вăл – арçынна апат пĕçерсе çитересси? Чăрт сурасси çеç.

– Пурăна киле ăнланăн.

Чăнах та, вăхăт иртсен çак сăмахсен пĕлтерĕшне чухларăм. Çулталăкран Юрккăпа пĕрлешрĕмĕр, хулара хваттер тара тытса пурăнтăмăр. «Хаваслă» пурнăç пуçланчĕ. Çук, Юркка эрех ĕçсе çапкаланса çӳремест, пĕр вĕçĕм пирус мăкăрлантармасть. Манăн упăшка – яка пырлă. Çакă пире харкаштарать-хирĕçтерет. Иксĕмĕр кунĕн-çĕрĕн çакăн пирки кĕрлетпĕр. Апат пĕçерсе халтан кайрăм. Юркка пĕр апата икĕ хут çимест. Ун валли яланах çĕннине янтăламалла. Темĕн те янтăлатăп: салат, çуллă шаркку, яшка, пăтă... Тарăхнипе хăть сирпĕнсе кай: Юркка кирек мĕнле апат çинĕ чухне те тиркемелли сăлтав тупать. Пĕррехинче ирхине чутах çывăрса юлаттăм. Кравать çинчен мĕнле хăвăртлăхпа сиксе тăтăм-ши? Пӳртре пушар тухнă евĕр чупкаларăм. Упăшка валли апат пĕçермеллеçке! Сунтăха уçрăм та алла мĕн лекнине кăлартăм. Хăвăрт кăна вир пăтти пĕçертĕм, çу самай ятăм.Васкарăм пулин те тутлă пулчĕ. Юркка сĕтел хушшине вырнаçрĕ, турилккери пăтта тем авăрттарчĕ-çавăрттарчĕ те:

– Мĕн ку? Çӳп-çапне мĕншĕн уйăрмарăн? – терĕ вăл кашăка çăвара хыпиччен. Хура пĕр пĕрчĕ курнă иккен.

– Туллашса ан лар. Çи мĕн пуррине, – шухăшлама та ĕлкĕреймерĕм – çак сăмахсене персе ятăм.

– Сысна апачĕ ку. Тепĕр тесен, сысна та çиес çук çак пăтта!

– Кĕрлесе ан лар! Пыру туратлă-им? Хура пĕрчĕ çакланасран хăратăн-и? – тарăхса кайрăм эпĕ. Упăшка нимĕн те чĕнмерĕ, турилккене хăйĕн умĕнчен сирчĕ те чей ĕçме тытăнчĕ. Кун хыççăн икĕ кун калаçмарăмăр. Юркка апат тиркенине пула çеç çемьере чашăк-тирĕк кĕмсĕртетет. Мĕн тумалла? Пĕлместĕп. Тутлă мар пĕçеретĕп-ши? Сăрлă пырлă упăшкан кăмăлне ниепле те тупаймастăп. Шутсăр тиркет. Çĕр улми шуратнă чухне куçне асăрхамасăр хăварасси те пулать паллах. Çакна упăшка яшкара курчĕ тĕк – хурах! Çапла пĕррехинче пăрçа яшкине кайса тăкрĕ. Эпĕ кӳренни уншăн нимĕн те мар. Кун пирки шухăшламасть вăл. Хăйне вара пи-и-итĕ юратать. Тепрехинче /ун чухне хам та айăплă пултăм ĕнтĕ/ Юркка кукăль ăшĕнчен вăрăм çӳç туртса кăларчĕ. Хайхискер çăварне аллипе хупларĕ те туалета вирхĕнчĕ. Чылайччен асапланчĕ. Кун хыççăн кукăль курайми пулчĕ. Тепĕр енчен – мана лайăх. Яка пырлă упăшка валли кукăль пĕçерсе ăшталанас çук. Юрĕ, упăшка хăйĕн «пыйтисене» килте кăтартни темех мар. Ăна хам суйларăм, качча тухрăм – чăтмах тивет. Анчах хăнара та курнăçланма кирлех-ши? «Эпĕ ăна çиместĕп, кăна юратмастăп», – тесе çеç ларать Юркка. Мĕн пур арçын хур тукмакки явнă чухне манăнни тăрă шыв сыпса ларать. Çынсенчен аван мар. Ун çине куç айăн пăхнине сисетĕп-ха, анчах нимĕн те тăваймастăп. Юркка эпĕ каланине хăлхана чикесшĕн мар. Ячĕшĕн те пулин ăна-кăна çырткаласчĕ хăть. Тепĕр тесен, упăшкапа хăнана та каймăттăм, анчах тăван-пĕтенпе хутшăнмасан лайăх мар. Нимĕн те тăваймăн: мăшăра çавăтатăп та шăла çыртса хăнана утатăп.

Пĕрле выляса ӳснĕ тусăмсем эпĕ шик! шăхăрса пурăнатăп тесе шухăшлаççĕ. Ара, упăшка пирус туртмасть, эрех-сăрапа айкашмасть. Лешсем хăйсен ӳсĕр упăшкисене хăть çĕрле, хăть кăнтăрла урам тăрăх шыраса халтан каяççĕ. Çук, хама телейсĕррисен шутне кĕртместĕп. Юрккан туратлă пырне шута илмесен пирĕн çемьери хутшăну аванах. Апат тиркекен упăшкапа çырлахма тиветех.

**Сăрлă пыр АРĂМĔ.**

РЕДАКЦИ ПОЧТИНЧЕН

# Чĕркуçленсе каçару ыйтрĕ



Салам, «Çамрăксен хаçачĕн» ĕçченĕсем! Эрне кунсерен юратнă кăларăма чăтăмсăррăн кĕтетĕп. «Юратупа наркăмăша» çыракансемшĕн савăнатăп, пĕрле хуйхăратăп. Шел те, пурнăç урапи тикĕс çулпа кусмасть. Пăрăнчăксем тупăнсах тăраççĕ.

Манăн савăнса кун кунламалăх йăлт пур. Упăшка лайăх вырăнта ĕçлет, шалу пысăк. Пирĕн хĕрпе ывăл ÿсеççĕ. Асли 10-мĕш класра вĕренет, кĕçĕнни 3-мĕшĕнче ăс пухать. Ачасем аван ĕлкĕрсе пыраççĕ, шкул пурнăçне хутшăнаççĕ, хисеп хучĕсене тивĕçсе савăнтараççĕ. Эпĕ те кашни кун ĕçе утатăп. Канмалли кунсене çемьепе ирттеретĕп.

Ваньăпа университетра ăс пухнă чухне мăшăрлантăмăр. Малтанах общежитири пĕчĕк пÿлĕмре хĕсĕнкелесе пурăнтăмăр. Часах манăн çие юлчĕ. Упăшкам пире тăрантарассишĕнех каçсерен хуралçăра ĕçлерĕ. Кристина çуралсанах мана питĕ йывăрччĕ. Ваньăна курмастăм. Вăл та хĕрĕмĕн пĕрремĕш çитĕнĕвĕсемпе савăнаймарĕ. Ĕçрен ĕшенсе таврăннăскер пĕр-икĕ сехетлĕхе канма выртатчĕ. Эпĕ тута тăсаттăм – кунĕпе сăпка умĕнче ларáттăм та упăшкам выçă çÿренине тавçăрмастăм. Çапла пĕррехинче чăтаймарăм. «Эсĕ пире юратмастăн! Пĕр вĕçĕмсĕр таçта çухалса çÿретĕн», – терĕм. Хам Ваня университетран пасара васканине аван пĕлеттĕм-ха. Çĕрĕпе куç хупманскер кăн! пăхрĕ. Сĕтел хушшинчен тăчĕ те пĕр сăмах чĕнмесĕр тухса утрĕ. Упăшкам висĕ каç киле таврăнмарĕ. Пăшăрханнипе çывăрайми пултăм. Кристина та эпĕ куляннине туйса пĕр вĕçĕмсĕр нăйкăшрĕ. Ачана утиялпа чĕркерĕм те пасара тухса утрăм. Куштанлăха пула ытлашши персе ятăм. Çав тери йывăр пуласса пĕлнĕ тĕк качча тухмастăм... Пĕчĕк пепкепе ăçта кайса кĕрес? Атте-анне вĕренсе тухсан çеç çемье çавăрмалла тесе темиçе те каларĕ. Аслисен сăмахне итлемерĕм. Тăван яла таврăнма намăс...

Пасара çитрĕм, анчах Ваньăна шыраса тупаймарăм. Унăн пуçлăхĕ пÿлĕме чĕнсе илчĕ те:

– Итле, хĕрĕм, упăшку ыран ĕçе тухмасан текех ан килтĕр. Мана ун пеккисем кирлĕ мар! – терĕ вăл хаяррăн. Кристина сасăран хăраса çари! çухăрчĕ. Пĕчĕк хĕрĕм куççульпе пĕрремĕш хут йĕчĕ. Куçăмран çутă тумламсем шăпăртатса юхрĕç. Ваньăна ăçта шырамалла?

– Наташа, эпĕ сире пулăшаятăп пуль, – терĕ çÿллĕ арçын. Хайхискер упăшкама тусĕ патĕнче курнине пĕлтерчĕ. Вăл каланă адреспа çитрĕм. Çур сехете майлă алăк уçасса кĕтрĕм. Хваттерте усал шăршă явăнчĕ. Диван çинче Ваня выртатчĕ. Ÿсĕрскер куçне аран-аран уçрĕ те эпĕ тăнине курсан: «Тухса кай», – терĕ.

– Хе-хе, епле чиперскер! Кун пек çырлана тутанма та шел, – терĕ алăка уçнă арçын. Хайхискер алăра пĕчĕк ача пулнине пăхмасăр мана ыталама пикенчĕ. Кристинăна туртса илчĕ те кĕтесре выртакан арçын çумне хучĕ. Вăйлăскер аллăма çатăрласа тытрĕ, курткăна хывма пуçларĕ. Эпĕ кăшкăрашнипе хĕр пĕрчи вăранчĕ те макăрма тытăнчĕ. Унăн сассине илтсен Ваня ура çине сиксе тăчĕ. Тинех мĕн пулса иртнине ăнкарнăскер мана ярса тытнă арçынна чышкипе çапрĕ. Хайхискер месерле кайса ÿкрĕ. Кĕтесри юлташне пулăшма васкарĕ. Упăшкам Кристинăна çĕклерĕ те мана çавăтса тухрĕ. Çак пулăм хыççăн пĕр-пĕрне хисеплеме, пулăшма пуçларăмăр. Çемьере упăшкапа арăмăн пĕр чăмăр пулмалла.

Ваня диплом илсенех ĕçе вырнаçаймарĕ. Укçа кирлех. Хайхискер ялти арçынсемпе ют хулана çул тытрĕ. Тĕрĕссипе, çавăн чухне упăшкана хытă кÿрентĕм. Кристинăна ача садне вырнаçтартăм. Хам лавккара сутуçăра тăрăшрăм. Юнашар уйрăмра арçын ĕçлетчĕ. Игорь йывăр курупкасене йăтса кĕме пулăшатчĕ. Вăлах касса аппаратĕпе ĕçлеме вĕрентрĕ. Вăл авланнине, висĕ ача ÿстернине пĕлеттĕм. Пĕррехинче Игорь ĕç хыççăн юнашарти кафене чĕнчĕ. Хирĕçлеме хăяймарăм. Унпа ĕçлеме кăна мар, калаçса ларма та кăмăллă. Кафере çепĕç кĕвĕ янăрарĕ, сĕтел çине ĕçме-çиме лартрĕç. Кунĕпе пĕр чĕптĕм çименрен часах ÿсĕрĕлтĕм. Игорь шÿтсем каласа култарчĕ. Малалла тĕтрери пек. Çур çĕр çывхарнине сисмен те! Юлташăм хăйпе пĕрле пыма ÿкĕтлерĕ.

– Хĕрĕм килте пĕчченех ларать, шикленĕ, – терĕм.

– Ан хăра, вăл пĕччен мар. Тухтăрсем ун çумĕнчен пăрăнмĕç, – лаплаттарчĕ Игорь. Çакскер мана, амăшне, Кристина кăнтăрла чуччуран ÿксе алли-урине амантнине, пит-куçне чĕртернине пĕлтермен! Эпĕ тавар складĕнче пулнă чухне лавккана воспитатель пынă иккен.

Сыватмăша чупса çитрĕм. Палата алăкĕ умĕнче Ваня кĕтсе илчĕ.

– Чунăм, каçарсам! Сире нушара хăвартăм, текех уйрăлмăпăр, – терĕ упăшкам. Вăл эпĕ вăхăта ăçта тата кампа ирттернине пĕлеймерĕ, çавăнтанпа Ваня маншăн Çĕр çинчи пĕртен пĕр арçын.

Ывăлăм çут тĕнчене киличчен хваттер, çăмăл автомашина туянтăмăр. Упăшкам тупăшлă ĕç вырăнĕ тупрĕ. Шик! шăхăрса çеç пурăнмалла. Анчах мăшăрăма шуйттан илĕртрĕ пуль. Икĕ ачапа вăхăт иртни сисĕнмерĕ. Денис канăçсăр ÿсрĕ. Хăш чухне çĕрĕпе нăйкăшрĕ. Кун иртнине сисместĕм. Выртса канма çеç ĕмĕтленеттĕм. Ваньăна курмастăм. Вăл эпир çывăрма выртсан çитетчĕ, вăраниччен тухса каятчĕ. Ĕçлесе ĕшенекен упăшкама шеллеттĕм, тĕпренчĕкĕмсемпе пĕчченех аппаланаттăм. Арçын арçыннах çав. Ăна та çепĕçлĕх кирлĕ. Эпĕ, килте кивĕ халатпа çÿрекенскер, Ваня урăххин ытамĕнче киленнине тавçăрман та.

Пĕррехинче кĕçĕннипе уçăлса çÿренĕ чухне лавккана кĕтĕм. Тĕлĕннипе чутах кайса ÿкеттĕм. Упăшкам сарă çÿçлĕ майрапа ыталанса тăрать. Ача кÿмине тĕксе çитрĕм те:

– Ывăлу ÿссен ăна кусран пăхайăн-и? – тесе ыйтрăм. Хурав кĕтсе илеймесĕр çаврăнса утрăм. Ваня каçхине ытти чухнехинчен маларах çитрĕ. Чечек çыххи тыттарчĕ те чĕркуçленсе каçару ыйтрĕ.

Халĕ çамрăксем çемье çавăрнă-çавăрманах каялла ЗАГС уйрăмне васкаççĕ. Кĕркунне çеç иккĕмĕш сыпăкри шăллăм авланчĕ. Çĕнĕ çул умĕн мăшăр уйрăлчĕ. Сăлтавĕ – пĕр-пĕрне ăнланманни. «Эпĕ ăна качча илтĕм. Вăл вара мана туссемпе сăра ĕçме чарать», – лаплаттарса хучĕ тин çеç авланнăскер. «Юлташсем патне пĕрле çитĕр», – сĕнтĕм эпĕ. «Э-э-э! Арăма пĕрле сĕтĕрсе çÿреме-и?» – кăмăлсăрланчĕ хайхискер. Хам пирки çеç шухăшланă пулсан манăн çемье тахçанах арканĕччĕ. Шел, ăс-хакăл çулсем иртсен çеç килет. Тĕпренчĕкĕмсене чăтăмлăха вĕрентетĕп. Нумай çул каялла кăмăл еккипе кайнă пулсан упăшкапа савăнса пурăнмăттăм.

**Наталья ИВАНОВА.**

Шупашкар хули.

# Çул çинчи инкек

Таня автобусран район центрне çитиччен анса юлчĕ. Хĕллехи кĕске кун кăнтăрла иртсен каç пулчĕ теме те юрать. Хĕр чăрăнуран иртиччен курткине лайăх тÿмелесе капюшонне тăхăнчĕ, кĕсйинчен перчеткине кăларчĕ, аллине сивĕрен хĕтарса унта пытарчĕ. Çанталăкĕ те хаяр. Автобусран аннăанман пит çăмартине чĕпĕтнине туйрĕ çамрăкскер. Асламăшĕ вĕрентнĕ сăмахсене ăшра каларĕ, инкек-синкеке, тăшмана, усалтĕселе хăйĕн çулĕнчен сирме турăран ыйтрĕ. Утмалăх çулĕ вăрăм. Тăватă километра парăнтарма çулташ тупăнмарĕ. Тавралăха каçхи сĕм çапсан туххăмрах тĕттĕмленнине Таня сиссе ĕлкĕреймерĕ, шикленсе хыçала çаврăна-çаврăна пăхрĕ, çавăнтах шарт сиксе икĕ еннелле тинкерчĕ. Турра вĕçĕмсĕр кĕлĕ турĕ, киле çитме васкарĕ.

Пирĕшти евĕр таса çак хĕр валли паянхи кун çăлтăрсем те тухмарĕç. Уйăх та унăн таса чунĕрине çутатса çул уçса пымаллаччĕ те... Çук. Усалпа калаçса татăлнă тейĕн – уйăхĕ те, çăлтăрĕ те...

Хĕр васканăçемĕн васкарĕ. Кăçал кăна шкул пĕтерсе техникума вĕренме кĕнĕскер кашни эрнерех яла килсе çÿрет. Анчах паянхи пек каçа юлса пĕччен утса курманччĕ. Асфальт çулпа тинех çăмăл пĕр машина шăхăрса иртрĕ. Чăрăнмарĕ. Унтан тепĕр иккĕ. Те вырăнĕ пулманран, те палламанран Таньăна лартмарĕç. Тен, лартманни лайăх та. Амăшĕ ăна палламан çынпа машинăна ларма хушман. Усал шухăшлă çын паянхи пурнăçра сахал мар.

Савнă каччи Виктор ялта пулнă тăк хирĕç тухатчех. Е Шупашкарта вĕреннĕ пулсан вĕсем яла пĕрле килĕччĕç. Анчах чун çунтармăшĕ аякри хулара, Питĕрте, вĕреннĕрен савнисем паян пĕрле мар. Пĕр-пĕрин патне шăнкăравласах тăраççĕ Таньăпа Виктор, тунсăхлаççĕ. Таса юратупа хĕмленекен хĕр чĕри ăна самантлăха та манаймасть.

Шухăшĕсемпе пасăрах килте вăл. Амăшĕ ĕçрен таврăннă ĕнтĕ. Шăллĕ яланхи пекех урамра пулĕ, ача-пăчапа тăвайккинчен ярăнса савăнать ахăртнех. Ашшĕ чире кайса çемьерен ир уйрăлни 12 çулти хĕр ача чĕрине самаях амантса хăварчĕ.

Çурма çула çитсен тăрук çилтăман тухрĕ, теме систерсе хĕр умĕнче тĕпĕртетрĕ. Хирĕç килекен автомашина çутине аран курчĕ çуран утаканскер, çийĕнчех çулран пăрăнчĕ. Хыçалтан килекен çутăран иртес тесе-ши – çаврăнса пăхма пуçне пăрнăччĕ кăна, анчах хыçран васкаса вашлаттараканни хĕре уямарĕ. Икĕ «тимĕр урхамах» хирĕç пулнă вăхăтра çеçпĕл евĕр черченкĕ хĕр мĕнпе айăпа кĕчĕ-ши?

...Сивĕ çил шăхăрни хăлхана касрĕ. Çавăнтах ури ыратнине туйрĕ вăл. Унтан ытла пит çăмартийĕ пĕçерсе йĕпеннине алăпа тытма тăрмашрĕ, вăл та хускалмарĕ. Суранĕсен ытла ыратнăран хулăн саслă арçын усал сăмахсемпе перкелешнине Таня туймарĕ. Пысăк та тарăн кусĕпе тÿпенелле çăлăнăç шыранăн пăхрĕ те тăнне çухатрĕ...

Хĕр сыватмăшра «вăрансан» хăй умĕнче Виктор ларнине курчĕ те аван марланчĕ. Ури те, алли те аманнăскерĕн виççĕмĕш кунхине кăна куçĕ уçăлчĕ. Сессие ăнăçлă вĕçлесе каникула яла персе çитнĕ савнийĕ унăн умĕнче ларни пăлхантарчĕ ăна. Хăрушă каçа аса илчĕ. Питĕнчен юн сăрхăнатчĕ мар-и? Эппин, халь вăл илемсĕр? Тинех Виктор ăна юратас çук. Пăрахĕ. Таньăн куçĕ шывланчĕ. Алли-ури вырăнтах-ши тесе хăвăрт йăшăлтатрĕ, вĕсене туйрĕ. Тен, эпĕ утаймастăп? Утсан та, питĕмкуçăм илемĕ Виктора савăнтармĕ. Таня куçне хупрĕ. Анчах куççуль хупнă куçа çĕнтерсе çиеле тухрĕ. Савнийĕ ăшă аллипе ăна типĕтрĕ, вĕри тутипе сĕртĕнчĕ. Вĕсем пĕр-пĕрне сăмахсăрах ăнланчĕç.

Тискер çав каç усал сăмахпа вăрçса хăварнă хулăн саслă арçыннăн чĕри вырăнĕнче чул пулчĕ-ши? Çул хĕрринче юн юхтарса выртакан хĕре епле чунпа пăрахса хăварчĕ-ши? Хăçан та пулсан киревсĕр çак хĕтлану ун чунне кăшлĕ, канăçсăрлантарĕ.

Палатăна, мăшăр кăвакарчăн евĕр пăшăлтатакан савнисем патне, Таньăн амăшĕ кĕчĕ, куççульне хытарса каларĕ: «Кипкепе çуралнă-çке эсĕ манăн, Танюша. Юрать, çав каç юнашар яла каякан водитель сана асăрхаса сыватмăша леçнĕ. Унсăрăн...»

«Кипкепе çуралнă», – тенине лайăх ăнланать Таня. Апла вăл телейлĕ. Юнашар çывăх çыннисем – амăшĕ тата юратнă каччи. Вĕсем часрах сывалма хавхалантараççĕ.

**ЕЛЕНА.**

наркăмăш

# Çичĕ хут тар кăлармасăр хаçат тухмастех

## “Çамрăксен хаçачĕ” вулакансен кăмăлне туллин тивĕçтертĕр тесе ĕçлекенсен пĕр кунĕ

**“Çамрăксен хаçатĕнче” 2012 çулта “Журналист профессие улăштарать” рубрика пурччĕ. Ольга Калитова корреспондент хăйне сутуçă, дизайнер, вĕрентекен, 112 служба операторĕ, типографи печатникĕ тата ытти професси-специальноçра тĕрĕслерĕ. Сăмах май, ку рубрикăна тытса пынă корреспондент халĕ декрет отпускĕнче – çĕр-шыври демографи лару-тăрăвне лайăхлатать. Ахăртнех, вулакансем хаçат кăларакансен ĕçĕпе те паллашасшăн. Эпĕ те профессие улăштарам-ха. Меллĕ самантпа усă курса – ара, умра Чăваш пичечĕн кунĕ-çке – вĕсен кулленхи ĕç-хĕлĕ пирки каласа кăтартам. Калем ăстисем “Кашкăра ури тăрантарать” ваттисен сăмахне улăштарни пирки илтнĕччĕ-ха эпĕ. Кашамана кăна мар, журналиста та ури тăрантарать-ши? Тĕпчесе пĕлер. 8025 экземплярпа пичетленекен “Çамрăксен хаçачĕ” вулакансен кăмăлне кайтăр тесе çанă тавăрса ĕçлекенсемшĕн кăрлачăн 16-мĕшĕ мĕнле иртнĕ?**



● Любовь Петрова, Алена Алтухова, Дмитрий Моисеев тата Елена Лукина çĕнĕ номере сӳтсе яваççĕ.

**01.00** “Çамрăксен хаçачĕн” редакторĕ Дмитрий Моисеев киле илсе кайнă материалсене редакцилесе пĕтерчĕ те çывăрма выртрĕ – ара, ыран çĕнĕ номере пичете ямалла-çке, канни пăсмĕ.

**02.00** “Чуна уçса калаçар” рубрикăна тытса пыракан Альбина Юрату вара хуп турттарма шухăшламасть те. Чăваш чĕлхи вĕрентекенĕнчен Ирина Диаровăран интервью илнĕскер кăрлачăн 25-мĕшĕнче тухакан номер валли статья çырать. Ыйхи пусса килсен те чăвашлăхшăн кар тăракан поэтесса кашни йĕркине чунĕ витĕр кăларать, хатĕр интервьюна сасăпа вуласа упăшкине çывăрма чăрмантарать. Альбина Юрату кăна мар, çыравçăсем те хаçатри литература страници валли çĕнĕ калав-повеç çыраççĕ-тĕр.

**8.30** “Çамрăксен хаçачĕн” çĕр варринче тăрса та хаçат пирки шухăшланă /çапларах вĕсен ĕçĕ: ун çинчен Пичет çуртĕнчен тухсан та манаймаççĕ – килех “сĕтĕрсе” каяççĕ/ ĕçченĕсем редакцие вирхĕнсе çитрĕç. Коридорпа утнă чухнех пальто-куртка тӳмисене вĕçертеççĕ – ара, паян ĕç шутсăр нумай-çке. Пӳлĕме кĕнĕ-кĕменех, çири тума пăрахсанах çĕнĕ кăларăмсемпе паллашаççĕ, вĕсенче мĕн çырнине тишкереççĕ.

**9.00** “Хыпар” Издательство çурчĕн директорĕ-тĕп редакторĕ Алексей Леонтьев 16 кăларăма кăларса тăракансене яланхиллех хăйĕн патне пуçтарчĕ. Мĕн пур япала-пулăм çине тиркевлĕ куçпа пăхаканскер çитес номерте мĕнле ыйтусене хускатмалли пирки каламасăр хăвармарĕ, туса çитерейменен ĕç-семшĕн те ятларĕ. Мĕн тăвăн, пуçлăхăн йăлт сăнаса-пĕлсе тăмалла!

**9.30** “Çамрăксен хаçачĕн” ĕçченĕсем кăларăм редакторĕн пӳлĕмĕнче республикăра, çĕр-шывра, тĕнчере мĕн пулса иртнине хивре сӳтсе яврĕç. Чăваш Енĕн 46 çамрăкĕ Раççей Президенчĕн премине тивĕçнĕшĕн хĕпĕртерĕç, номерте мĕн пирки уйрăммăн çырмаллине палăртрĕç. Малтанхи кун ЧР Пуçлăхĕн стипендине тивĕçнисен списокне чăвашла куçарса пичете хатĕрленĕ май ку йышра “Хыпар” корректорĕ Инна Данилова та пурришĕн савăнчĕç.



● Петр Сидоров – хаçатăн çывăх тусĕ.



● Ирина Алексеева статья çырма хатĕрленет.

**9.50** Кашни ĕçчен – хăйĕн пӳлĕмĕнче. Пуç çĕклемесĕр çыраççĕ, вулаççĕ, йăнăшсене тӳрлетеççĕ – патша çуран çӳрекен пӳлĕме кайма та вăхăт çитмест. Çĕрпӳре Вячеслав Эткер скульптор халăх паркĕ тума пуçланă, анчах унти архитектура палăкĕсем Вячеслав аттене килĕшмен. Пачăшкă тĕне кĕмен чăвашсен палăкĕсемпе кăмăлсăрланнă. Тӳре-шара ун хутне кĕнĕ-мĕн. Мĕншĕн? Тĕрлĕ тĕн, йăла-йĕрке пĕр-пĕринпе çыхăнса тăмасть-им? Вĕсем юнашар пулни камăн ирĕкне пăсать? Çак ыйтусене Ирина Алексеева тĕпчесе çитес номер валли статья хатĕрлет, çавăнпа кирлĕ çынсемпе курнăçмашкăн телефонпа çыхăнса калаçса татăлать.



● Альбина Юрату интервью çырать.



● «Хыпар» ИÇ директорĕ-тĕп редакторĕ Алексей Леонтьев хатĕр полосасене тĕрĕслет .

**11.00** Любовь Петрова Раççей Президенчĕн сумлă премине тивĕçнĕ Марта Вавилова патне чупрĕ. Унтан таврăнсанах лауреат пирки статья çырма ларчĕ.

**12.00** Апат вăхăчĕ. Анчах “Çамрăксен хаçачĕн” редакцийĕн журналисчĕсен уни-куни хыпкалама та вăхăт çук, вĕсем сехет çине пăхма маннă. Ăнсăртран Елена Трофимова корреспондент Алена Тимкова иртнĕ шăмат кун качча кайни пирки аса илчĕ. Апла ăна саламламалла! Хаçат ĕçченĕсем пĕрле 5 минутлăха пухăнчĕç те “Сас-хурана ĕненмелле-и?” рубрикăна тытса пыракан корреспондента Мускавра ĕçлекен Василий Алтуховпа çемье çавăрнă ятпа саламласа иксĕлми телей, татулăх, çураçулăх сунчĕç. Вулакансем, журналистсем кăнтăрлах черкке йăтрĕç тесе ан шухăшлăр. “Çамрăксен хаçатĕнче” тар кăлара-кăлара ĕçлекенсем сиенлĕ йăласемпе пачах туслă мар – вĕсем сывă пурнăç йĕркине çирĕп пăхăнаççĕ. “Эсĕ пулас упăшкупа епле паллашнă?” – кăсăкланчĕ Елена Лукина корректор. “2010 çулта пулнăччĕ ку. Эпĕ Кӳкеçри ватăсемпе сусăрсен интернат çуртĕнче библиотекарьте ĕçлеттĕм. Унта хайхи пулас упăшкам та вырнаçрĕ. “Çавăн пек чипер сантехниксем те пулаççĕ-ши?” – ăна пирвайхи хут курсан шухăшларăм ăшра”, – вăрттăнлăхне уçрĕ Алена. Унтанпа вĕсем туслăха аркатман. “ÇХ” тусĕсем, пĕлĕр: ют çĕр-шыв çыннисенчен интервью илме кăмăллакан корреспондент малашне статьясен айне Алтухова хушаматпа алă пусĕ.



● Ав епле илемлĕ Алтуховсем.



● Пĕр канмасăр ĕçлекен Елена Трофимова сăн ӳкерессине пĕлтерсен çеç пуçне çĕклерĕ.

**13.00** Кун каçипех оригиналсене /хут çине пичетленĕ статьясене çапла калаççĕ/ вуласа тӳрлетекен, материалсенче асăннă фактсене тĕрĕслекен редактор – Дмитрий Моисеев – хут купи айне пулнăскер, çамки çинчи тарне шăла-шăла кăрлачăн 17-мĕшĕнче тухмалли номерĕн юлашки страницисене тĕрĕслет. Пĕчĕк пĕр йăнăш асăрханă та ятлать кăна журналистсене. Çакна ăнсăртран илтнĕ çын пӳлĕмрен тухса таратех.

**14.30** РФ физкультурăпа спорт отличникĕ Петр Сидоров, ЧР Пуçлăхĕн Михаил Игнатьевăн кубокне çĕнсе илессишĕн иртнĕ ăмăрту пирки çырнă статьяна малтанхи кун килсе панăскер, Пичет çуртне материала полосара вуламашкăн чупса çитрĕ. Лара-тăра пĕлменскер майĕпен утма хăнăхман – кун каçипе таçта та çитет.



● Елена Лукина корректор хаçата типографие леçет.

**18.00** Ĕç кунĕ вĕçленмен-ха. Компьютер центрĕнче полосасем тухаççĕ. Дежурнăй редакторпа корректор вĕсене танлаштараççĕ, тӳрлетеççĕ. Набор операторĕсемпе калăплавçăсем те ывăннă. Пĕрремĕшĕсем кун каçипе вун-вун мар, çĕр-çĕр материалри йăнăшсене компьютерпа усă курса тӳрлетнĕ, иккĕмĕшĕсем темиçе хаçат калăпланă.

**19.00** “Хыпар” Издательство çурчĕн директорĕ-тĕп редакторĕ хатĕр полосасене вуласа тĕрĕслет. 16 страницăллă “Çамрăксен хаçатне” “Чăваш Ен” ИПК типографине леçме ирĕк парать. Кăларăмăн редакторĕ, дежурнăй редакторĕ тата корректорĕ хаçата тепĕр хут пăхса тухса тӳрлетеççĕ. Ку номершĕн яваплă мар корреспондентсем вара пĕр мероприятие пухăннă çынсемпе тĕл пулма васкарĕç – вĕсене “Çамрăксен хаçачĕ” пирки каласа кăтартма, ăна çитес çур çуллăха çырăнтарма...

**20.30** Типографи ĕçченĕсем хаçата пичетлеме пырса парасса кĕтсе ывăннă. Вĕсем хатĕр хаçата илсе юлнă хыççăн печатниксем хĕрӳ ĕçе пуçăнаççĕ. Çакскерсен 8 пин те 25 экземпляр пичетлесе хатĕрлемелле. Вĕсене вара тул çутăличчен Раççей почтин вырăнти çыхăну уйрăмĕсене çитермелле. Çапла шăранать “Çамрăксен хаçачĕн” пĕр номерĕ. Кун пек ĕç, паллах, çичĕ хут тар кăлармасăр пулмастех.

**Хаçат редакцийĕнче унччен пĕр кун та ĕçлесе курман, журналистсен тапса тăракан вăй-хăватĕнчен пĕççе шарт çапса тĕлĕннĕ**

**Петр ЕГОРОВ.**

**Редакцирен: статья авторĕ çĕрле такси тытса Шупашкар тăрăх çӳренĕшĕн, Пичет çуртĕнче кун каçнăшăн ӳкĕнмен. Ку кăна-и, вăл кунта ĕçлеме те вырнаçасшăн – апла тăк журналистсен ĕçĕ чи кăсăклисенчен пĕри.**




ХАЛӐХ МЕЛӖПЕ

# Ӳпке шыҫҫинчен

**Салам! Манӑн пӑтӑрмах сиксе тухрӗ. Нумаях пулмасть чирлерӗм: ӳт температури хӑпарчӗ, ӳслӗк аптӑратрӗ. Анчах чире ура ҫинчех ирттерӗп тесе «больничнӑй» илмерӗм. Кӑлӑхах. Чир шала кайрӗ. Сыватмӑша ҫитрӗм, тухтӑр ӳпке шыҫнине палӑртрӗ. Сиплентӗм. Ӳпке шыҫҫине халӑх мелӗпе пӗтерме май ҫук-ши? Пурӑна киле ҫак сӗнӳсем кирлӗ пулӗҫ, тен?**

**Алена И.**
Шӑмӑршӑ районӗ.

Ӳпке шыҫни – хӑрушӑ чир. Ҫавӑнпа кун пек чухне тухтӑр патне пӗр тӑхтамасӑр каймалла. Ӳпке шыҫҫине халӑх мелӗпе сиплеме пулать-ха, анчах малтан тухтӑрпа канашламаллах.

1 стакан сӗлле 1 литр сӗте ярса вӗретмелле. Шӗвеке вӑйсӑр ҫулӑм ҫинче 1 сехет вӗретмелле, тӗпне ан лартӑр тесен пӑтратмалла. Кун хыҫҫӑн сӑрӑхтармалла, сӗте кунӗпе пӗчӗкшерӗн ӗҫмелле. Е ингаляци тумалла. 10-15 сантиметр тӑршшӗ бинт татӑкне суханпа сӑтӑрмалла та ингаляци тумалли ятарлӑ савӑта хумалла /ӑна аптекӑра сутаҫҫӗ/, 8-10-шар минут кунне 6-7 хут сывламалла. Мӑйран ыхра шӑлӗсенчен янтӑланӑ шӑрҫа ҫакни, пӳлӗмре импӗр татӑкӗсене хуни, аир тымарне чӑмлани те витӗмлӗ. Бальзам пулӑшать. Ӑна хатӗрлемешкӗн 250 грамм алоэ, ҫур литр кагор /хаклӑ йышши/, 350 грамм шӗвӗ пыл илмелле. Алоэ ҫулҫине татиччен ӑна 2 эрне шӑвармалла мар. Ҫулҫа ҫумалла мар, тусанне ҫеҫ шӑлмалла, вӗтӗ турамалла, банкӑна ямалла. Унтан кагор, пыл хушмалла, лайӑх пӑтратмалла. Хутӑша сивӗрех вырӑна икӗ эрнелӗхе лартмалла. Унтан сӑрӑхтармалла. Бальзама 1-ер апат кашӑкӗ кунне 3 хут ӗҫмелле. Вӑл ӳпке чирӗсенчен сипленме, ӳпкене ҫирӗплетме пулӑшать.

ИЛЕМ САЛОНӖ

# Ҫӳҫ сӑрламашкӑн

**Хӗрсем ҫӳҫе сӑрлама кӑмӑлласҫӗ. Хӑшӗ-пӗри ҫутӑ ҫӳҫлӗ пулма ӗмӗтленет. Анчах лавккаран сӑрӑ туянма ан васкӑр-ха. Вӑл самай сиен кӳрет. Ҫӳҫе сиенлетмесӗр сӑрлас килет-и? Тархасшӑн.**

**Салтак тӳми отварӗ.** Салтак тӳмин 1 апат кашӑкӗ чечекне, ҫавӑн чухлех вӗлтӗрен тымарӗ, ҫур литр шыв илмелле, 10-15 минут вӗретмелле, 20 минут лартмалла. Отвара ҫӳҫе сӗрмелле, пуҫа целлофан хутаҫ тӑхӑнмалла. 1 сехетрен ҫӳҫе салтак тӳмин настойӗпе чӳхемелле. Ӑна ҫапла хатӗрлемелле: салтак тӳмин 2 апат кашӑкӗ чечекне вӗри шыва ярса 15-20 минут лартмалла, сӑрӑхтармалла. Салтак тӳми ҫӳҫе сутатать, ҫирӗплетет.

**Пыл.** Унпа сипленме те, маска тума та пулать. Анчах нумайӑшӗ пылпа ҫӳҫе сӑрлама май пуррине пӗлмест. Пылран йӳҫеклентерекен япала, водород перекисӗ евӗрскер, тухать. Анчах вӑл ҫӳҫе сиенлетмест. Малтан шампуне апат содипе пӑтратмалла, пуҫа ҫумалла. Ку ҫӳҫе ҫемҫетет. Унтан ӑна кӑшт типӗтмелле, пыл сӗрмелле. Чи лайӑххи – акаци чечекӗсенчен пуҫтарни. Пуҫа хутаҫпа хупламалла мар, мӗншӗн тесен реакци вӑрахланать ҫеҫ. Витӗмӗ лайӑхрах пултӑр тесен маскӑна 10 сехет тытмалла, унтан ҫумалла. Ҫӳҫ ҫуталнисӗр пуҫне ҫемҫелет те.



**Турӑхпа лимон.** Вӗсем пулӑшнипе ҫӳҫе сӑрлама ҫеҫ мар, ҫирӗплетме те пулать. Ҫӳҫ те хӑвӑртрах ӳсет. 2 апат кашӑкӗ эрехе коньяк, 1 ҫӑмарта, 30-50 миллилитр турӑх, ҫур лимонӑн сӗткенӗ, 1 чей кашӑкӗ шампунь илмелле. Пӗтӗмпех лайӑх пӑтратмалла. Хутӑша типӗ ҫӳҫе сӗрмелле, целлофан хутаҫ тӑхӑнмалла, ал шӑллипе витмелле. Маскӑна мӗн чухлӗ ытларах тытатӑн – ҫӳҫ ҫавӑн чухлӗ ҫутӑрах пулӗ. Кун пек сывӑрма та юрать. Пуҫа шампуньпе ҫунӑ хыҫҫӑн тутлӑлантаракан бальзам сӗрмелле.

ПӖЛЕТӖР-И ЭСИР?

# Иммун тытӑмне ҫирӗплетекен ҫимӗҫсем

**Иммунитет ҫирӗп мар тӑк ҫын тӑтӑшах чирлет, ҫавӑнпа ӑна ҫирӗплетме тӑрӑшмалла. Уйрӑмах – хӗлле. Тӗрӗс апатлану, усӑллӑ япалапа пуян ҫимӗҫсем – ҫаксем иммун тытӑмӗшӗн питӗ пӗлтерӗшлӗ. Аялтарах асӑннӑ вунӑ ҫимӗҫе рациона кӗртсен чылай чир-чӗрпе аптӑрасран сыхланма пу-**

**Ыхра.** Вӑл сиенлӗ бактерисене вӗлернине, вирусемпе кӗрешнине чылай тӗпчев ҫирӗплетнӗ ӗнтӗ. Ыхра витӗмӗпе организмра ятарлӑ япала пулать, вӑл вара – иммун тытӑмӗшӗн антиоксидант евӗр. Ыхра тутине, шӑршине юратмастӑр тӑк ӑна салата, апата та пулин ярӑр.

**Грейпфрут.** Кӗрен, хӗрлӗ тӗслӗ грейпфрутра С витамин нумай, ҫавна май ҫак ҫимӗҫ шӑнса пӑсӑласран сыхлать, ытти чирпе вирлӗ кӗрешет. Грейпфрут кӗрен тӗслӗ-и? Эппин, унра биофлавоноид нумай. Ку вара организмшӑн – питӗ лайӑх фито-нутриент. С витамин иммун тытӑмне ҫирӗплетет.

**Кӑмпа.** Шампиньонра селен, антиоксидантсем пуррине палӑртнӑ. Унра ҫавӑн пекех ниацин, В витамин пур. Вӗсем те организм хӑрушсӑрлӑхӗшӗн явапллӑ. Кӑмпа вирусемпе кӗрешнине, сиенлӗ бактерисене пӗтернине кура ӑна рациона кӗртме сӗнеҫҫӗ. Иммун тытӑмне ҫирӗплетес килет тӗк кӑмпаран ан пӑрӑнӑр.

**Пахча ҫимӗҫ** /уйрӑмах ҫутӑ тӗслисем/. Каратиноидсем – питӗ кирлӗ антиоксидантсем. Вӗсем иммун тытӑмне лайӑх витӗм кӳреҫҫӗ. Симӗс, хӗрлӗ, сарӑ, хӗрлӗрех сарӑ тӗслӗ пахча ҫимӗҫсем ҫиме тӑрӑшӑр. Вӗсенче каратиноид нумайрах. Рациона тӗрлӗ тӗслӗ пахча ҫимӗҫ кӗртме тӑрӑшмалла.

**Тӗслӗ купӑста.** Хӗрес чечеклӗ пахча ҫимӗҫ, ҫав шутра брокколи, брюссель купӑсти те, ҫын сывлӑхне паха витӗм кӳрекен витаминсемпе, антиоксидантсемпе пуян. Ҫак пахча ҫимӗҫри холин организмри клеткӑсене лайӑх ӗҫлеме май парать, вӑл вар-хырӑмшӑн та питӗ усӑллӑ. Тӗслӗ купӑстари глутатион – паха антиоксидант, вӑл чылай чир-чӗртен хӳтӗленме пулӑшать.

**Асая ҫырли.** Унпа ытларахӑшӗ начарланас тӗллевпе усӑ курать. Ҫак ҫырла антиоксидантсемпе пуян. Вӑл иммун тытӑмне ҫирӗплетнине ӗнентерейменн-ха, ҫапах антиоксидантсемпе пуян пулни – ӑна рациона кӗртмелли сӑлтав.

**Мӑйӑр.** Унра белок нумай пулнине пурте пӗлеҫҫӗ. Унсӑр пуҫне мӑйӑр усӑллӑ ҫусемпе пуян. Вӗсем – тӗрӗс апатланӑвӑн пӗр пайӗ. Мӑйӑрта Е витамин, омега-3 ҫу, антиоксидантсем пур. Ҫавна май ку ҫимӗҫ иммун тытӑмне ҫирӗплетмелли лайӑх мел шутланать. Куллен мӑйӑр кӑштах ҫини шала вӑраха кайнӑ чирсемпе кӗрешме те май парать.

**Ҫӑмарта сарри.** Унӑн усӑлӑхӗ пирки тӗрлӗ шухӑш пур. Ҫапах ӑна рациона кӗртмелли сӑлтав чылай. Вӑл белоксемпе, селенпа, цинкпа, ытти микроэлементпа пуян. Ку вара иммун тытӑмне питӗ кирлӗ. Ҫӑмарта холестерин шайне пысӑклатать, анчах ӑна виҫеллӗ ҫисен ҫак хӑрушлӑхран хӑрама кирлӗ мар. Вӑл шӑнса пӑсӑлнинчен хӑтӑлма пулӑшать.

**Устрица.** Вӑл – паллӑ афродизиак, ҫапах сывлӑхшӑн та усӑллӑ. Унра цинк нумай пулнӑран иммун тытӑмӗ ҫирӗпленет. Пӗр порци устрица организма талӑкра кирлӗ чухлӗ цинкпа тивӗҫтерет. Суран хӑвӑртрах ӳт илтӗр, юн кӗвелни лайӑхлантӑр тесен устрица ҫимелле.

**Йогурт.** Организма чир-чӗртен хӳтӗлес, иммун тытӑмне ҫирӗплетес тӗллевпе усӑллӑ бактерисем вар-хырӑмра пухӑнаҫҫӗ. Йогурт шӑнса пӑсӑласран, ытти чирчӗртен, ҫав шутра усал шыҫӑран та, сыхлать.

ШУТА ИЛӖР

# Апатлану пирки

**Сывлӑх ан хавшатӑр, илемлӗ пулас тесен мӗн тумалла? Ҫак сӗнӳсене шута илӗр.**

- Ирхине выҫӑ хырӑмла икӗ стакан шыв ӗҫмелле. Лимон хушсан тата аванрах. Тепӗр 10 минутран олива е йӗтӗн ҫӑвӗ 2 кашӑк ӗҫмелле. Ҫавӑн пекех симӗс пан улми ҫиме юрать. 10-15 минутран лайӑх апатланмалла: организм вӑранать тата ку ӑна энергипе тивӗҫтерет.
- Апатланнӑ хыҫҫӑн 40 минут шыв ӗҫмелле мар. Ку апат ирӗлнине вӑрахлатать, хырӑмлӑх стенкисем те сарӑлаҫҫӗ.
- Апат лайӑх ирӗлтӗр тесен кунне 5 хут ҫимелле, анчах кӑштахшар. Куллен пӗр вӑхӑтра апатланма тӑрӑшмалла. Ҫапла майпа организм йӗркене хӑнӑхать, вар-хырӑм лайӑхрах ӗҫлеме тытӑнать.
- Мунча е сауна начарлатмасть, организми шыва ҫеҫ кӑларать. Вӑл вара тепӗр икӗ сехетренех каялла таврӑнать.
- 16 сехет хыҫҫӑн белоклӑ апат ҫеҫ ҫимелле. Кӑнтӑрла хыҫҫӑн ҫинӗ углевод ҫӑва ҫаврӑнать.
- Ҫын хырӑм тӑраннине 20 минутран ҫеҫ туять. Ҫак вӑхӑтра мӗн чухлӗ апат ҫиме пулать? Эппин, ан васкӑр.
- Кӑшт ҫырткалас килет-и? Анчах юрамасть-и? Кун пек чухне 50 хут сикмелле, 20 хут чӗркуҫленмелле е ванна кӗмелле, лавккана ҫул тытмалла.
- Шурӑ ҫӑкӑр та, хури те калориллӗ. Начарланас килет тӗк вӗсене ытлашши нумай ҫимелле мар.
- Чей ытла нумай ӗҫмелле мар. Ҫак шӗвеке юрататӑр тӑк ӑна апатланнӑ чухне мар, каярах ӗҫӗр. Чейе сахӑр ямасан та юрать. Ку – ытлашши калори ҫеҫ. Ун вырӑнне пыл илмелле.

ТУТЛӐ ПӖҪЕРЕР-И?

### Пылпа лосось

**Лососьӑн тачка пайӗ, тӑвар, пӑрӑҫ, ыхран 2 шӑлӗ, ӳсен-тӑран ҫӑвӗ кирлӗ. Соус валли 2 апат кашӑкӗ шӗвӗ пыл, ҫавӑн чухлех хӗрлӗ эрех уксусӗ, 6 апат кашӑкӗ соя соусӗ, 1 апат кашӑкӗ ӳсен-тӑран ҫӑвӗ илмелле.**

Пулла тасатмалла, ҫумалла, типӗтмелле, унтан пӑрӑҫ сапмалла, ҫур сехет лартмалла. Кун хыҫҫӑн ӑна ҫӳхе касмалла. Хӗртнӗ ҫатмана ӳсен-тӑран ҫӑвӗ ямалла. Ыхрана кӑшт лапчӑтмалла, ҫатмана ямалла. Пулла тирӗпе аялалла вырнаҫтармалла, ӑшаламалла. Унтан ҫаврӑрмалла, кӑшт соус сапмалла, каллех ҫаврӑрмалла, суос ямалла. Ҫапла майпа пулӑ пиҫиччен темиҫе хут тумалла.

### Чӑх какайӗ

**Чӑх какайӗ, ҫур литр турӑх, тӑвар, техӗмлӗх кирлӗ.**

Какая вакламалла, тӑвар, техӗмлӗх сапмалла. Унтан ӑна савӑта вырнаҫтармалла, турӑх ямалла – какая хуплатӑр. Аша 2 сехет маринадламалла. Кун хыҫҫӑн какая турӑхпа пӗрле противень ҫине хумалла, духовкӑра пӗҫермелле.

### Азу

**Ӗне, сысна, чӑх какайӗсем, маринадланӑ хӑяр –150 грамм, ҫавӑн чухлех помидор е томат пасти, 100 грамм кишӗр, 1 сухан, ыхран 3 шӑлӗ, пӑрӑҫ, лавр ҫулҫи, техӗмлӗх кирлӗ.**

Какая тӑрӑхла турамалла, ҫу янӑ ҫатмара ӑшаламалла. Пахча ҫимӗҫе хуппинчен тасатмалла, турамалла. Какай янӑ ҫатмана сухан, хӑяр, кишӗр, помидор е томат пасти хушмалла. Ҫулӑма пӗчӗклетмелле те пӑшӑхламалла. Азу пиҫес умӗн ыхра, пӑрӑҫ, лавр ҫулҫи, техӗмлӗх ямалла.

### Сыртан

**200 грамм ҫӑнӑх, 200 миллилитр сӗт, 150 грамм сыр, 100 грамм кӑлпасси, 1 чей кашӑкӗ разрыхлитель кирлӗ.**

Сыра вӗтӗ теркӑпа хырмалла, кӑлпассие вӗтӗ турамалла. Сырпа кӑлпассие хутӑштармалла, сӗт, ҫӑнӑх хушмалла. Хутӑша ятарлӑ хут сарнӑ противень ҫине кашӑкпа хумалла, 220 градус таран хӗртнӗ духовкӑра 20 минут пӗҫермелле.

Страницӑна Ирина АЛЕКСЕЕВА хатӗрленӗ.

# Сканворд




# КУЛСА ВИЛМЕЛЛЕ...

Арçын лавккана кĕрет.

– Сирĕн пан улми пур-и? – ыйтать сутуçăран.

– Пур.

– Тархасшăн, кашнине чĕркесе парăр. Мандарин пур-и?

– Ăхă.

– Эппин, вĕсене те чĕркĕр. Рис кĕрпи пур-и?

– Пур, анчах ăна сутмастпăр.

* * *

– Атте, сана анне мĕн тума кирлĕ? – ыйтать пĕчĕк ывăлĕ ашшĕнчен.

– Мĕн тума, мĕн тума?.. Пурнăç пыл та çу пек ан туйăнтăр тесе.

* * *

Пиччĕшĕпе шăллĕ тупăшаççĕ.

– Кур-ха ăна! Хăйĕн валли пысăк татăк какай илчĕ, мана пĕчĕккине пачĕ! – кăшкăрать кĕçĕнни.

– Эсĕ мĕнле тăвăттăн вара? – ыйтать асли.

– Паллах, хам валли пĕчĕк татăк илĕттĕм...

– Эппин, мĕн кăшкăрашатăн эсĕ? Сана ахаль те пĕчĕк татăк патăмçке!

* * *

– Чунăм, манăн сан валли икĕ хыпар пур. Пĕри – лайăххи, тепри – начарри, – тет арăмĕ упăшкине.

– Мĕнле хыпарсем?

– Япăххи: эпĕ санăн мĕн пур укçуна тăкакларăм. Лайăххи: эсĕ чухăн пулсан та эпĕ сана юрататăп.

* * *

Геометри урокĕнче.

– Ваçук, ак çак виç кĕтеслĕх тўрĕ пулнине ĕнентер, тархасшăн, – тет вĕрентекен.

– Тупа тăватăп, вăл – тўрĕ.

– Ĕçре те хăвăра курортри пек туйăр.



* * *

Хĕрĕ ашшĕ патне шăнкăравлать:

– Атте, мана вăрларĕç! Темĕнле тăмсай мана качча илесшĕн!

– Сана мĕнле машинăпа илсе кайрĕç? – хыпăнса ўкет арçын.

– Бентлипе!

– Ой, хĕрĕм, эппин телейлĕ пул. Эпир аннўпе саншăн савăнатпăр!

* * *

Арăмĕ упăшкине хăлхинчен пăшăлтатать:

– Чунăм, эпĕ сан пата юмахран çитрĕм.

– Мĕнле юмахран?

– Ырринчен.

– Мĕн, кăларса ячĕçим?

* * *

Ашшĕпе пĕчĕк ывăлĕ машинăпа пыраççĕ.

– Атте, полицейскисен умĕнчен мĕншĕн хуллен иртсе каймалла? – кăсăкланать пĕчĕкки.



– Полицейскисем ача пекех: ăнсăртран çул çине сиксе тухма пултараççĕ.

* * *

– Укçа икĕ хут нумайрах пултăр тесен мĕн тумалла?

– Тĕкĕр умне хумалла.

* * *

Паллашу сайтĕнчи информаци.

Ят: Таня.

Хушамат: кăтартман.

Ўсĕм: кăтартман.

Электрон почта: ivanova 1988 @mail.ru

* * *

Гена крокодил Чебурашкăн çўçне касать.

– Чебурашка, сана хăлхусем кирлĕ-и?

– Паллах!

– Акă тыт.

* * *

Асламăшĕ – мăнукне:

– Çеруш, кур-ха: би-би.

– Асанне, ку – BMW iMI 4x4.


## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРЎСЕМ

## Саламлатпăр

*Чи çывăх та хаклă çыннăмăрсене – Патăрьел районĕнчи Турхан ялĕнче пурăнакан Валерий Витальевичпа Нэля Матвеевна ТРОШКИНСЕНЕ – 55 çулхи юбилейĕсемпе чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, тулли телей, вăрăм кун-çул сунатпăр.*



*Саламлаканĕсем Петровсемпе Зубовсем.*

## ПРОДАЮ

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер, доставка – бесплатно. Т. 89875766562.

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**20.Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Найдёте дешевле – уступим. Без вых. Т. 89625989686.

**22.ОКНА пластиковые, железные ДВЕРИ.** Реально низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

**35.Блоки керамзитобетонные** вибропрессованные, пропаренные. Дёшево. **Т. 89373866629.**

**42.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40, **кольца колодезные** – диам. 1,5м; 1м; 0,7м; 0,8м; 0,45м. Доставка. **Бурение.** Т.: 8-987-666-41-40, 8-937-010-01-41.

**52.Пластиковые ОКНА,** железные **ДВЕРИ.** Замер. Доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: 8-917-652-96-94, 8-927-667-95-88.

**117.ОКНА ЧУВАШИИ** – пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 8-905-028-11-82.

## КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**587.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.